[library stamp] ...ская ...ека ...Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

1953 çул Апрель 3 эрнекун № 68 (8977)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕн Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Паянхи номерте:

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов Корея ыйтăвĕ пирки пĕлтерни (1 стр.).
ПАРТИПЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТАВАРСЕН ХАКĔСЕНЕ ПĔЧĔКЕТЕССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННА ПОСТАНОВЛЕНИ ЕÇÇЫНИСЕНЕ ТАТА ЫТЛАРАХ ТАРĂШСА ĔÇЛЕМЕ ХАВХАЛАНТАРАТЬ (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Х. Лисин.—Механизаторсем хушшинчи политикăлла-массăллă ĕçе лайăхлатассишĕн (2 стр.).
СТРОЙКĂСЕНЕ МАТЕРИАЛСЕМ ЫТЛАРАХ ПАРАР! П. Анисимов.—Кирпĕч производствине аталантармалла (3 стр.).
А. Курманин.—МТС çураки умĕн (3 стр.).
ФЕЛЬЕТОН: С. Павлов.—Таркăн (3 стр.).
Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чжоу Энь-лай пĕлтерни (4 стр.).
Демократиллĕ Корея Халăх Республикин премьер-министрĕ маршал Ким Ир Сен пĕлтерни (4 стр.).
Корейăра тыткăнри çар çыннисене улăштарас ыйту пирки генерал Кларк, маршал Ким Ир Сен, генерал Пын Дэ-хуэй çырăвĕсем çинчен тата Чжоу Энь-лай пĕлтерни çинчен урăх çĕршывсенчи хаçатсем çырасçĕ (4 стр.).

Информациллĕ пĕлтерӳ

Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнче КПСС Чăваш обкомĕн черетлĕ IV-мĕш Пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум «Республикăри «Коммунизм ялавĕ» тата «Советская Чувашия» хаçатсен ĕçĕ çинчен» В. Я. Яковлевна С. В. Карташов юлташсен докладĕсене итлесе сӳтсе яврĕ.

Сӳтсе явнă ыйту тăрăх Пленум тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Строительство материалĕсем ытларах туса кăларар

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ «СССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче» промышленноçа, тăваттăмĕш пилĕкçуллăхрипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ытларах укçа-тенкĕ хывма палăртнă. Çĕршывра Атăлпа Днепр, Кăмăла Аму-Дарья çинче коммунизмăн аслă стройкисем тăвас ĕç сарăлса пырать. Хуласемпе поселоксенче, колхозла ялсенче,—пурçĕрте те пурăнмалли çуртсем шкулсемпе больницăсем тата ытти учрежденисемпе çуртсем лартасси çултан-çул ӳсет.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тăвана пулăшнипе, пирĕн республика сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче социализма промышленноçпа ялхуçалăхне аталантарас, ĕççыннисен культурине ӳстерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Пирĕн малашлăх тата пысăк. Пилĕкçуллăхра республикăра Шупашкар гидростанцине тума тытăнмалла. Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн хăватне хальхинчен виçĕ хут ӳстермелле, Шупашкарта çĕнĕ пысăк трикотажлă фабрика, больница, педагогика институтĕпе ялхуçалăх институчĕ валли çĕнĕ çуртсем лартмалла.

Строительство планне йĕркеллĕ тултарса пырасси паха материалсен çителĕклĕ туса кăларнинчен нумай килет. Çавна май партин XIX-мĕш съезчĕ тĕп материалсем туса кăларассине икĕ хутран ытла ӳстерме, строительство материалĕсен пахалăхне лайăхлатма, вĕсен ассортиментне нумайлатма палăртнă.

Партипе правительство строительство материалĕсем тăвакан промышленноçа аталантарассине пысăк хурса хакласçĕ, предприятисене хăватлă оборудовани, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан механизмсем нумай уйăрса параççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче Шупашкарти, Ивановăри кирпĕч заводĕсем тата ыттисем те çĕнĕ прессем, транспорт хатĕрĕсем, экскаватор, паравус тупнă, çĕнĕ сарайсем лартнă. Предприятисенче техникăна алла илнĕ пусарулă кадрсем ӳссе çитĕнчĕç. Строительство материалĕсем туса кăларакан предприятисенче чĕртавар тĕлĕшĕнчен лайăх условисем ĕçлесçĕ: чĕртавар яхăнра кӳрсе килмелле мар, топливо та вырăнтах пур. Çав паха майсемпе усă курса, республикăри кирпĕч заводĕсем 1952 çулта, 1946 çулхипе танлаштарсан, утă хута яхăн ытларах продукци туса кăларнă. Анчах пулни те республикăри строительство материалĕсен тăвакан промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн хăвăрт ӳссе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пырать.

Производство сезонне çителĕксĕр хатĕрленнипе пула 1952 çулта предприятисем стройкăсене 3,8 миллион кирпĕч, 3 пин тонна известь, пĕр пин кубометр ытла чул парса çитереймен. Государство стройкăсене цемент, металл, оборудовани çителĕклĕ уйăрса парать. Строительствăна монтаж планне йĕркеллĕ тултарса пыма вырăнти материалсем, уйрăмах кирпĕч çитменни хытă чăрмантарать.

Кирпĕч заводĕсен çуркуннепе çуллахи ĕçĕ çантăлăкра çеç ĕçлесçĕ. Ĕç йĕркеллĕхĕ вĕсене сезона вăхăтра тата пысăк пахалăхпа хатĕрленни татса парать. Çавна предприяти руководителĕсем пĕлмеççĕ те мар-çук. Çуркунне ситрĕ. Пĕр-ик эрнерен кирпĕч тума тытăнмалла. Анчах халĕхе пĕр предприяти те сезона тĕплĕн хатĕрленсе çитмен. Шупашкарти кирпĕч заводĕ хăйпĕр оборудованине юсаса пĕтермен, анчах чугун çул йĕрĕпне хывасси вăраха тăсăлнă. Кăçалтан пуçласа завод «Вольсовет» электростанцирен электроэнерги илсе тăмалла. Завод электричество оборудованине вырнаçтарса лартас, электричество линийĕ хывас, çĕнĕ сарайсем туса ситерес ĕçе вĕçлемен. Кирпĕч хĕртекен кăмакана пысăклатас, пурăнмалли çуртсене юсас, рабочисем илес ĕç те çителĕксĕр хăвăртлăхпа пулса пырать. Уйрăмах Ивановăри кирпĕч заводĕ сезона лайăх хатĕрленнине палăртас пулать. Кăçал кирпĕч тивĕтлесси çук сарай лартма пуçламан ...ăртри, Çĕмĕрлери, Канашри кирпĕч заводĕсен тата Тăвайри черепица заводĕ те сезона хатĕрленсе çитмен.

Чăваш АССР Вырăнти промышленноçть министерствипе Чăвашпромсовет строительство материалĕсем тумалли плана çулсерен тултараймаç. Вĕсене пăхăнса тăракан предприятисенче промартельсем руководителĕсем кирпĕч тăвакан оборудование, сараÿсене кăмакасене юсама, пурăнмалли хатĕрлесе хума, кадрсем пухас вĕрентме кирлĕ пек хатĕрлемеççĕ. Хăш-пĕр райпромкомбинатсемпе промартельсен руководителĕсем кирпĕчпе черепица тăвассине пĕчĕк ĕç вырăнне хураççĕ.

Предприятисем сезона хатĕрленмелли паха вăхăтра кирлĕ пек усă курмаççĕ. Строительство материалĕсем тăвакан промышленноçть управленийĕ (начальникĕ М. Репкин юлташ), Вырăнти промышленноçть министерстви (министрĕ Н. Бобров юлташ), Чăвашпромсовет (председателĕ Я. Маклашкин юлташ) хăйсене пăхăнса тăракан предприятисемпе промартельсене кирпĕч тумалли сезона хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ, хуçалăх руководителĕсене ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмаççĕ, малта пыракан коллективсемпе производство новаторĕсен опытне сармаççĕ.

Предприятисем сезона çителĕксĕр хатĕрленнипе пĕр çĕртах вăл—унти пуçламăш парторганизацисем администраци ĕçне çителĕксĕр контролĕ тăнипе, социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăнни, рабочисем хушшинчи партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе çӳлĕ пусăма çĕклеме тăрăшманни.

Строительсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн, çуртсен пахалăхне лайăхлатассишĕн, строительство хакне йӳнетессишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр кĕрешсе пынă социализмла обязательствисене йышăнаççĕ. Вĕсем хăйсен çăмăхĕсене чысăн пурнăçласа пырасси стройкăсене паха материалсем çителĕклĕ парса тăнинчен килнине питĕ лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем кирпĕч, известь, черепица, чул туса кăларакан предприятисен коллективĕсем пĕрмаях ăсра тытма тивĕçлĕ.

Предприятисенче сезона вăхăтра тата пысăк пахалăхпа хатĕрленĕ çитессишĕн, производство планне йĕркеллĕ тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлă сарас пулать. Иртнĕ çулхи опыт çакна уççăн кăтартса парать: кашни предприятин плана тултарма çеç мар, ирттерсе тултарма та условисем пур. Строительство материалĕсем тăвакан промышленноçть управленийĕн пăхăнса тăракан кирпĕч заводĕсем оборудование татти-сыпписĕр ĕçлеттернĕ пулсан, брак пулассине планпа палăртнă шая çити чакарнă пулсан, 10 миллион кирпĕч нумайрах туса кăларма пулăччĕç. Хуçалăх, парти тата профсоюз руководителĕсен производствăри резервсене шырама, палăртма, вĕсемпе усă курма хăйсен коллективĕсене вĕрентмелле. Сталинла премии лауреачĕсен, производство новаторĕсен опычĕсене меслетне анлăн сарни, рационализаторсен сĕнӳсене çийĕнчех пурнăçа кĕртни, рабочисене техникăна вĕренме тимлĕн пулăшни, хăватлă оборудованине татти-сыпписĕр ĕçлеттерни,—çаксем пурте ĕç тухăçлăхне ӳстермелли мелсем пулаççĕ.

Халăх хуçалăхĕн çак питĕ кирлĕ отрасльне аталантарасси—вырăнти Советсен пысăк та ответлă задачи. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ колхозсем кирпĕчпе черепица туса хатĕрлемелли сиплерĕ, мĕншĕн тесен çакă вăл строительство материалĕсен хакне ӳстерет, ялхуçалăх аталантарас ĕçе чăрмантарать. Çавна май строительство материалĕсен производствине аталантарас ĕçĕн халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ уйрăмах ӳсет. Кирпĕчпе черепица, тума, известь хĕртме чĕртавар пур çĕрте те тенĕ пек çителĕклĕ. Кашни районта райпромкомбинатсемпе промартельсем пур. Строительство материалĕсем туса кăларассине вĕсен чи малта тăракан тивĕçĕ пулмалла.

Иртнĕ çулсенче чылай колхозсем кирпĕч тумалли оборудовани тунчĕç, сарайсем лартрĕç. Райпромкомбинатсемпе промартельсен çав тĕп фондсемпе, усă курас тĕлĕшпе колхозсемпе калаçса татăлмалла. Ку тĕлĕшпе райсовет исполкомĕсен те пусарулăх пулма тивĕçлĕ. Çитес сезонта кирпĕч туса кăларасси пĕр пресс та, пĕр сарай та ахаль ан лартăр.

Канашра, Улатăрта, Çĕмĕрлере тата ытти çĕрте те çĕр кăмрăк шлакĕ нумай. Малта пыракан стройкăсенче çав шлакран стена хывмалли материал тăваççĕ. Вăл паха опыта пирĕн анлăн сарас пулать.

КПСС Шупашкар, Улатăр хула комитечĕсем, Çĕмĕрлери, Çĕмĕрле, Тăвай, Канаш, Куславкка райкомĕсем тата ыттисем те строительство материалĕсем тăвакан предприятисене пĕрле ытларах та тарăнрах интересленмелле, унти пуçламăш парторганизацисене партиллĕ-организациллĕ ĕçе лайăхлатма пулăшмалла. Хăш-пĕр ... пулса пырать ... [illegible]

Май уявĕнхи ăмăрту

Сезон планне тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ, апрелĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕмĕрле районĕнчи колхозниксем государство валли 31.891 кубометр йывăç касса хатĕрлерĕç, 25.504 кубометр çул хĕррине илсе тухрĕç, 10.428 кубометр турттарса кăларчĕç, 13.750 кубометр вагонсем çине тиерĕç. Çапла вара районти колхозниксем государство заданине чысăн пурнăçларĕç. Кунсăр пуçне Вырăнти топливо промышленноçть управленийне пăхăнса тăракан вăрманпромхоз 5:400 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, 6.000 кубометр турттарса кăларнă, 5.202 кубометр çул хĕррине илсе тухнă. Вăл сезонти плана ирттерсе тултарнă.

КПСС Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ **РЕЧНОВ.**

Райсовет исполкомĕн председатель заместителĕ **КРОТИКОВ.**

«Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан вăрманпромхоз директорĕ **РОЖКОВ.**

Вырăнти топливо промышленноçть управленине пăхăнса тăракан вăрманпромхоз директорĕ **ХРАМКОВ.**

Вăрман хатĕрлекенсен çитĕнĕвĕ

ПЕРВОМАЙСКИ, апрелĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан Первомайски вăрманпромхоз коллективĕ, Тăван çĕршыва йывăç материалсем ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн ăмăртса ĕçлесе, пĕррĕмĕш кварталта йывăç турттарса кăлармалли плана мартăн 30-мĕшĕ тĕлне 102 процент тултарчĕ.

Вăрманпромхоз директорĕ **НАУМОВ.**

Ĕç хастарлăхĕ ӳсет

Çĕмĕрлери йывăçран япаласем тăвакан «Комбайндеталь» заводри 5-мĕш цех коллективĕ партипе правительство чĕнсе каланине тата Верховнăй Совечĕн сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисене çине ответлесе, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума сăмах пачĕ. П. Горохова работница сменăри ĕç нормине 200 процентран кая мар, Д. Чунаев слесарь 200—250 процент таран тултарма пулчĕç.

Чунаев юлташ цех коллективне стахановла вăхтăна тăма чĕнчĕ. Коллектив çак чĕнĕве хапăл туса йышăнчĕ.

Цехра ĕç нормине 125 процентран кая тултаракан пĕр рабочи те çук. Чылай рабочисем ĕç нормине 200—300 процент тултараççĕ. Р. Афонин, Д. Чунаев, А. Сидоров жестянщиксем нормăна кулен 200—300 процент тултарса пыраççĕ. В. Виданов, К. Курасов, А. Кострюков электромонтажниксем нормăна 250—300 процент, Ефремова, Тюрина малярсем 200—250 процентран кая мар тултараççĕ.

Пĕр кунта тунă ĕç результачĕсене тепĕр ирхине кашни рабочи пĕлтереççĕ. Цехри агитаторсем рабочисем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе тимлĕн туса пыраççĕ. Вĕсем СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕн решенийĕсене çинчен, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен калаçусем ирттересçĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕн решенийĕсене ăнлантарса панă хыççăн, рабочи-монтажник А. Клинцов çапла каларĕ:—Ленин—Сталинăн вилĕмсĕр ĕçĕсем—шанчăклă алăра. Сталинăн чи çывăх соратникĕсем Тăван çĕршыва коммунизм çулĕпе çирĕппĕн ертсе пыраççĕ. Эпир хамăрăн Тăван çĕршыва вăйхăватне тĕреклетессишĕн, совет çыннисен ырлăхĕшĕн вăрăм-канма ĕçлĕпĕр.

5-мĕш цех коллективĕ ĕçри хастарлăха ӳстерме, паха продукци кăна туса кăларма сăмах пачĕ.

Т. ЕРОПЛАН,
«Комбайндеталь» заводри 5-мĕш цех начальникĕ.

Тухăçлă ĕçлесçĕ

ТĂВАЙ. Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе тăракан çĕнĕ артелĕн коллективĕ 1-мĕш кварталăн планне мартăн 25-мĕшĕ тĕлне 106,3 процент тултарчĕ. Халĕ артель коллективĕ, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, аслă уява апрель уйăхĕнчи плана 120 процентран кая мар тултарнипе кĕтсе илме çĕнĕ обязательство илчĕ.

Ăмăртура П. Кузьмин, Е. Архипова ертсе пыракан бригадăсем малта пыраççĕ. Ф. Леонтьева, З. Павлова, А. Алексеева çĕвĕ мастерĕсем кулленех нормăна 115—125 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва райпопа урапа-çуна тăвакан мастерскойĕсем ĕçлекенсем те хутшăнчĕç. Вĕсем Майăн 1-мĕшне апрель уйăхĕнчи планне 125 процент тултарнипе кĕтсе илеççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов Корея ыйтăвĕ пирки пĕлтерни

Тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарас ыйтăва илес пирки мартăн 28-мĕшĕнче Корея Халăх çарĕн Верховнăй командующийĕ Ким Ир Сен тата Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ Пын Дэ-хуэй ООН-ăн Корейăри хĕçпăшаллă вăйĕсен Главнокомандующине генерал Кларка панă ответлă çырăва пичетлесе кăларнă.

Çак çырура икĕ енĕн тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарас ыйту çинчен калать, çырура унсăр пуçне çакна кăтартса панă: ку ыйту тăрăх, тĕрĕссипе илсен, Корейăра перемири тăвасси çинчен калаçусем, пынă вăхăтра калаçса татăлнă, çар çыннисене улăштарас илессине ку тарăнччен пурнăçламан Панмыньчжоньри калаçусем чарăнса ларни кăна кансĕрлесе тăнă. Çакăнпа пĕрлех тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене Женева конвенцийĕн 109-мĕш статьи положенийĕсем тăрăх вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илме килĕшни çинчен калать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах тата тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене çакăн пек улăштарса илни тыткăна илнĕ çар çыннисене çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва пĕр чăрмавсăр йĕркелесе çитересси патне, çапла вара Корейăра перемири тăвасси патне илсе пымаллине палăртнă. Çак тĕлĕшпе халех Панмыньчжоньре тепĕр хут калаçусем пуçласа яма сĕннĕ.

Çакăн хыççăн Пекинра—Китай Халăх Республикин Государство административи совечĕн Премьерĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Чжоу Эн-лай, Пхеньянра — Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен кабинечĕн Председателĕ Ким Ир Сен тухса каланă. Китай Халăх Республикин Правительстви те, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви те çапла пĕлтерчĕ: вĕсем тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен панă çĕнӳпе килĕшсĕ тата вĕсем, халичченхи пекех, тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва халех йĕркелесе ярасси çинчен, çапла вара Корейăра вăрçа чарса лартасси çинчен килĕшӳ тума хатĕр тăраççĕ.

Çапла вара Китай Халăх Республикин Правительстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви Корейăра перемири тăвасси тата вăрçа лартасси çинчен килĕшӳ тăвас тĕлĕшпе тепĕр хут хăйсен пусарулăхне кăтартрĕç.

Эпĕ çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: Совет Правительстви Китай Халăх Республикин Правительстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительствин çак ырă ĕçĕпе пĕтĕмĕшпех килĕшет, çак ырă ĕçе пĕтĕм тĕнчери халăхсем черетрен хапăл туса йышăнасси пирки иккĕленме тăмасть. Совет Правительстви çавăн пекех тата çак сĕнĕве Америкăн Пĕрлешӳллĕ Штачĕсен правительстви тĕрĕс ăнланасса шанса тăрать.

Совет Правительстви яланах Корейăра тĕрĕслĕхлĕ перемири тăвас тата вăрçа лартас тĕллевпе тăвакан пур ĕçсене те пулăшса тăнă.

Çакăн ĕçĕн пуçламăшне Совет Правительстви пуçлăхĕ И. В. Сталин Инди Премьер-Министрĕ господин Неру чĕнсе каланине хирĕç 1950 çулхи июль уйăхĕнче панă ответрах хывнă.

Пурте пĕлеççĕ, Совет Союзĕн Хăрушсăрлăх Советĕнчи представителĕ 1951 çулхи июнь уйăхĕнче Нью-Йоркра радио тăрăх тухса калани Корейăра перемири тăвасси çинчен калаçу пуçласа ямалли никĕс пулса тăчĕ. Çак калаçусем малтан Кэсонра, унтан Панмыньчжоньра пынă вăхăтра перемири тумалли мĕнпур ыйтусем тĕрĕх калаçса татăлнă, тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриацилесси çинчен тăракан ыйту пирки кăна калаçса татăлайман. Анчах перемири çинчен пыракан калаçусене генерал Кларк иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче чарса лартрĕ, çак вăл перемири тума чăрмантарса тăчĕ.

Китайăпа Корея енĕ тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене тыткăна илнĕ çар çыннисене пирки 1949 çулта Женевăра йышăннă конвенци 109-мĕш статьи тăрăх улăштарса илес пирки генерал Кларк панă сĕнĕве йышăнчĕç.

Çак статьи çапла калать:

«Çакă статьян 3-мĕш абзацĕнче палăртнă ĕçсемсĕр пуçне, тепĕр статьян 1-мĕш абзацĕ тăрăх, пĕр-перине хирĕçрĕ тăракан енĕсен тыткăнри йывăр чирлекен тата йывăр аманнă çар çыннисене, вĕсене куçарса çӳреме юрăхлă таран сыватса çитерĕ хыççăн, вĕсен званийĕ мĕнле пулнине тата вĕсен мĕн чухлĕ пулнине пăхмасăр, хăйсен тăван çĕршывне ăсатса яма тивĕçлĕ».

Пĕр-перине хирĕçекен енсем вăрçă пынă вăхăтра тивĕçлĕ нейтралăй державăсем пулăшнипе, тыткăнри аманнă тата чирлĕ çар çыннисене, тепĕр статьян 2-мĕш абзацĕнче кăтартнă тăрăх, нейтралăй çĕршывсенчи госпитальсенче сыватас ĕçе организацилеме тăрăшаççĕ. Кунсăр пуçне, вĕсем çыв, нумай вăхăт хушши тыткăнра пулнă çар çыннисене репатрациилесси çинчен е нейтралăй çĕршывра тытса тăрасси çинчен килĕшӳ тума пултараççĕ.

Çак статьян пĕррĕмĕш абзацĕ тăрăх репатрацилеме тума палăртнă тыткăнри аманнă е чирлĕ пĕр çар çыннине те вăрçă пынă вăхăтра хăй ирĕк памасăр репатрацилеме çук».

Женевăри çак конвенци çак статьипе перемири тăвиччен, вăрçă ĕçĕсене чарса лартиччен тапхăр çинчен калать. Халĕ енĕ, çак статьяпа усă курасси çинчен килĕшӳ тунă пулсан тата ăна икĕ енĕн çывăх кунсенчех пусма пултараççĕ пулсан, пĕр тăхтаса тăмасăр тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илме тытăнма пулмалла тетĕр те юмасть.

Корея Халăх çарĕн Верховнăй командующийĕ Ким Ир Сенăн тата Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ Пын Дэ-хуэйăн çырăвĕ çине тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен генерал Кларк февралĕн 22-мĕшĕнче панă сĕнӳпе килĕшни çинчен пĕлтернĕ. Кунсăр пуçне Корейăра вăрçăна чарса лартас çутма калаçусене пуçласа яма та сĕнӳ панă.

Çакăн çинчен уйрăмах асăрхаттарни кирлĕ: Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Чжоу Энь-лай мартăн 30-мĕшĕнче пĕлтернипе,—ăна Китай Халăх Республикине Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительствисем çĕрле туса хатĕрленĕ,—тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илме кăна мар тата тыткăна илнĕ çар çыннисене репатрацилесси çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама сĕннĕ. Çакă вăл перемири çинчен килĕшӳ тума тата Корейăри вăрçа чарса лартма мар пулать. Китай Халăх Республикин Правительстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительствин хăйсем енчен тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс татса панă хыççăн тыткăна илнĕ çар çыннисене çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама сĕнеççĕ. Çакăн пек туна çунче икĕ енĕн те Корейăра перемири тăвас тĕлĕшпе пĕр-пĕрне шанса чĕререн тăрăшни кирлĕ.

Паллах, тыткăна илнĕ çар çыннисене репатрацилесси çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва çавăн пекех Женева конвенцийĕн положенийĕсем тăрăх татса памалла. Совет Правительстви те, Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительствисем те çакăн пек тăвассине çине тăчĕç. Анчах та çак ыйту пирки Панмыньчжонра нумай вăхăт хушши калаçни те, ООН Генеральнăй Ассамблейинче тĕмиçе хутчен сӳтсе явни те, пурте пĕлесçĕ ĕнтĕ, килĕшӳ тума май памарĕç.

Корейăра вăрçа вăрçакансем тата перемири çинчен килĕшӳ тăвас çул çинче тăракан енсем хушшинче çак ыйту хирĕçӳ кăларакан пĕртен-пĕр ыйту пулса тăнă пирки, Китай Халăх Республикин Правительстви те, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви те, мир туса хума тата Корейăри вăрçă ĕçне чарса лартма тăрăшса, çак ыйтăва пĕтĕмпех татса парас тĕлĕшпе çĕнĕ утăм турĕç. Вĕсем çапла тума сĕнеççĕ: икĕ енĕн те перемири çинчен калаçу пуçласа ямалла та вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă хыççăн хăйсен аллинче тăракан тата хăйсем тăван çĕршыва кайма тавраннма килĕшнĕ тыткăна илнĕ мĕнпур çар çыннисене çийĕнчех репатрацилемелле килĕшмелле; тыткăна илнĕ ытти çар çыннисене, вĕсене репатрацилесси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс татса пама, нейтралăй государство аллине паса памалла тăвас тĕлĕшпе килĕшмелле. Çакăн пек çĕнӳ вăл тыткăна илнĕ çар çыннисене репатрацилесси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс татса пама та Корейăра перемири тăвассине чăрмантарса тăракан мĕнпур чăрмавсене пĕтерме май парать.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, Корейăри вăрçа чарса лартма чĕререн тăрăшакан тĕнче Инсет хĕвелтухăçĕнче пĕтĕм тĕнчери мире тата халăхсен хăрушсăрлăхне тĕреклетме пулăшакан пĕтĕм тĕнчери халăхсем тата мĕнпур çынсем çак сĕнĕве чĕререн хапăл туса йышăнĕç тата ăна пурнăçласа пыр майсемпе те пулăшĕç.

Совет Правительстви Китай Халăх Республикин Правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительствин çакă сĕнĕве тĕрĕс пулнине йышăнать тата ăна пурнăçа кĕртме пур майсемпе те пулăшса пыма пулать.

Паллах, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ, унăн составĕнче Китайăн Корейăн законлă представителĕсем пулас пулсан, Корейăра перемири тăвас тата вăрçа чарса лартас тĕлĕшпе пысăкрах ĕç тума пултарнă пулĕччĕ.

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче Китай халăхĕпе Корея халăхĕн хăйсен законлă представителĕсем пулманни, пĕрремĕшĕнчен, çак организаци авторитетне хавшатать, иккĕмĕшĕнчен, тĕнчери хăрушсăрлăх тата пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетес ĕçе кирлĕ пек пулăшса пыма май памасть.

Совет Правительстви тепĕр хут Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче Китай халăхĕпе Корея халăхне тивĕçлĕ правăсем памалла тăвасси—тăхтаса тăмасăр тата памалли ыйтусенчен пĕри пулни çинчен асăрхаттарма кирлĕ, тесе-шутлать. ООН-ра Китайпа Корейăна тепĕр хут правăсем пани вăл, уйрăмах халĕхи условисенче, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн авторитетне тата унăн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшне ӳстерме тата пĕтĕм тĕнчере мир ĕçне тĕреклетме пулăшать.

Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи суту-илу çыхăнăвĕ

СССР Шалти тата тулашри суту-илу министерствипе Болгари суту-илу делегацийĕ хушшинче пынă калаçусем йĕркеллĕ вĕçленнĕ хыççăн, кăçалхи мартăн 31-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Болгари Халăх Республики хушшинче 1953 çулта пĕр-пĕрне таварсем тăратасси çинчен протокол çырса алă пуснă.

Çак протокол кăçал икĕ çĕршыв хушшинчи тавар çаврăнăшне, 1952 çулхипе танлаштарсан, чылай ӳстерме палăртать.

Совет Союзĕ Болгарие промышленноçть оборудованийĕ, ялхуçалăх машинисем, тимĕр прокат, çĕр мамăкĕ, нефть продукчĕсем, химикатсем тата ытти таварсем тăратать.

Болгари хăй енчен Совет Союзне çăртту промышленноçĕн продукцийĕ, табак, аш-какай, виноград эрехĕ, улма-çырла, томатсем тата ытти таварсем тăратать.

Протокола Совет Союзĕ енчен—СССР Шалти тата тулашри суту-илу министрĕ А. И. Микоян, Болгари енчен—Болгари министрĕсен совечĕн председателĕн заместителĕ Р. Дамянов алă пуснă.

Тырпул тухăçлăхне ӳстермелли паха май

Колхозсемпе совхозсене юлашки çулсем хушшинче вăрлăха акас умĕн сывлăша ăшăтасси анлă сарăлнă. Вăрлăха сывлăшра ăшăтса акни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ӳстерет. В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен академийĕ çакăн пек вăрлăха сывлăшра ăшăтассине, уйрăмах анлăн сарма сĕнет. Вун пĕр вăрлăха пĕтĕмпех пахалăх вăрлăх шăтас пулать. Çакăн пек вăрлăх, час шăтать, анчах шăтма пултаракан вăрлăх сывлăшра ăшăтни пурпĕр тухăçлă пулать. Çавăн пек вăрлăх пахалăхĕ сывлăшра ăшăтсан, унăн шăтас хăвачĕ 30—50 процент ӳсет, вăл ирте 10—20 процент ытлараx шăтса тухать. Çапла вара тĕрлĕ культурăсен тухăçлăхĕ гектар пуçне темиçе центнер тухăç ӳсет.

Иртнĕ кĕркунне чылай районсенче тырпула çантăлăк йĕпе тăнă вăхăтра тасатма тивнĕ. В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен академийĕ çакăн пек вăрлăха сывлăшра ăшăтассине, уйрăмах анлăн сарма сĕнет. Бун пек вăрлăх пĕтĕмпех пахалăх вăрлăх шăтас пулать.

Иртнĕ çулта Урал тата Хĕвелăнăç Çĕпĕр районĕсенче тырпула тăнă, ăшă тата хĕвеллĕ кунсем тăнă вăхăтра пухса кĕртнĕ. Колхозсемпе совхозсен ăнлăхĕ вăрлăх хатĕрленĕ. Çапах та вĕсене акас умĕн сывлăшра ăшăтсан вĕсен тухăçлăхĕ çуркунне ăшăтни усăллă пулать. Челябинск облаçĕнчи колхозсене сывлăшра ăшăтнă вăрлăх гектар пуçне 2—4 центнер ытларах тухать.

Кăçалхи çуркунне колхозсемпе совхозсене тĕштырă вăрлăхĕсене кăна мар, ытти культурăсен вăрлăхĕсене те сывлăшра ăшăтассă. Пĕтĕн вăррине, хĕвелçаврăнăшăн, нумай çул ӳсекен курăксен, хăмăл, хăмăл кĕнешни, кукурузан, пахча çимĕçсен тата ытти культурăсен вăрлăхĕсене те сывлăшра ăшăтсан тухăçлăхĕ чылай ӳсет. (ТАСС).

Партипе правительство таварсен хакĕсене йӳнетесси çинчен йышăннă постановлени ĕççыннисене тата ытларах тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать

Шупашкар. Чебторгăн 43-мĕш номерлĕ магазинĕнче çăм, пурçăн пир-авăр тата ытти йышши пир-авăр нумай сутаççĕ. Унта кăçал 555 пин тенкĕлĕх ытла тавар сутнă.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): А. А. Шашкина. Л. А. Плаксина, Н. Н. Шишокина тавар туянаççĕ. Сылтăмри Р. С. Иванова продавщица.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Пирĕн çĕршыв тата пуян та хăватлă пулĕ

Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен СССР Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленине Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи рабочисемпе служащисем çав тери хавасланса кĕтсе илчĕç. Çак савăнăçлă хыпара радиопа пĕлтерсенех кашни цехра, участокра рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен митингĕсем пулса иртрĕç.

Халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнăшăн рабочисемпе служащисем Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине чун-чĕререн тав тăваççĕ, Тăван çĕршыв ырлăхĕпе мухтавĕшĕн ырми-канми ĕçлеме пулаççĕ.

Работницăсем пурăнакан общежитири хĕрлĕ кĕтесе çынсем нумай пухăннă. Кунта Р. Соловьева агитатор работницăсемпе калаçу ирттерет.

— Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакне çĕнĕрен йӳнетни пирĕн çĕршыв çултан-çул тĕрекленсе, ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынине ярăççăн кăтартса парать,— тет М. Макарова работница.— Вăрçă хыççăн тавар хакĕсене ултă хутчен йӳнетни пирĕн ĕç укçине нумай ӳстерчĕ, пире пуян пурнăçпа пурăнма май пачĕ. Эпир, рабочисемпе работницăсем, Тăван çĕршыв ырлăхĕпе мухтавĕшĕн тата та ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр. Эпĕ сменăри задание ялан 150—175-шер процент тултарса пыратăп. Малашне икшер норма тăвассишĕн кĕрешетĕп.

— Эпĕ ултă ача амăшĕ, манăн упăшка фронтра çапăçса вилчĕ,— терĕ Т. Тимофеева работница.— Парти, совет правительстви ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен сталинла тăрăшнине пула эпир йывăрлăха туймастпăр. Манăн ачасем вĕренеççĕ, ĕçлеççĕ. Тавар хакĕсене йӳнетни пирĕн çĕршыв коммунизм патне çывхарса пынине яр-уççăн кăтартса парать.

Иккĕмĕш сборочнăй цехра сверловщица пулса ĕçлекен О. Николаева, Г. Рябина штамповщица, Р. Сергеева сверловщица тата ыттисем те тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетнишĕн партипе правительствăна тав туса сăмах каларĕç. Вĕсем Тăван çĕршыв вăй-хăватне ӳстерессишĕн, коммунизмăн аслă стройкисен заказĕсене срокчен пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлеме пулчĕç.

Хастарлăрах ĕçлеме пулаççĕ

Арлакан цеха 600 çын ытла пухăннă. Пурте савăнăçлă.

Цехри парторганизаци секретарĕ П. И. Рассказов юлташ митинга уçса, пир-авăр комбиначĕн главнăй инженерне А. Васильева юлташа сăмах парать.

— Эпир радиопа савăнăçлă хыпар илтрĕмĕр,—тет Васильева юлташ.—Партипе правительство апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакне çĕнĕрен — улттăмĕш хут йӳнетесси çинчен постановлени йышăнчĕç. Пĕтĕм совет халăхĕ çак постановление чун-чĕререн ырласа кĕтсе илчĕ. Таварсен хакне йӳнетни совет тенкине тата ытларах çирĕплетет, рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи ӳсет. Партипе правительство пирĕншĕн куллен тăрăшни çине ответлесе пирĕн тата хастарлăрах ĕçлемелле, ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, продукци пахалăхне лайăхлатмалла.

Мастер помощникĕ К. Тимофеев юлташ сăмах илет.

— Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакне йӳнетнине пула совет çыннисем пысăк усă илеççĕ. Партипе правительство пирĕншĕн атте пек тăрăшни çине ответлесе эпĕ тата хастарлăрах ĕçлеме, производство заданине куллен чылай ирттерсе тултарма сăмах паратăп.

Комбинатри паллă стахановка, Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ Ю. Сапожникова юлташ çапла каларĕ:

— Эпĕ СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ таварсен хакне çĕнĕрен йӳнетесси çинчен йышăннă постановление чун-чĕререн ырлатăп. Партипе правительствăна пирĕнтен, рабочисенчен — пысăк тав! Эпĕ апрель уйăхĕнчи производство заданине 125 процентран кая мар тултарма сăмах паратăп.

Митингра пулнисем Май уявĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва тата ытларах сарса яма, планран ирттерсе паха продукци туса кăларма, чĕртавар нумай перекетлеме обязательство илчĕç.

А. ЖИРНОВ.

Чун-чĕререн тав тăваççĕ

СĔРПӲ, апрелĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йӳнетесси çинчен ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление районти пиншер ĕççынни радио тăрăх итлерĕ.

Рабочисемпе колхозниксем, служащисем совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшакан тăванла правительствăпа Коммунистсен партине чĕререн тав тăваççĕ, çак постановлени çине ответлесе, социализмла производствăна татах та лайăхлатма, Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетессишĕн ырми-канми кĕрешме сăмах параççĕ.

Автомашинăсем юсакан заводри мастер П. П. Беспалов юлташ, пĕтĕм коллектив шухăш-кăмăлне палăртса, çапла каларĕ:

— Вăрçă хыççăнхи çулсенче партипе правительство апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене хальхине улттăмĕш хут йӳнетрĕç. Коммунизм обществи тăвакан çĕршывра çеç халăхăн материальнăй тата культурăллă пурнăçĕ çакăн пек хăвăрттăн чечекленме пултарать.

Тавар хакĕсене нумай йӳнетни ĕççыннисене мĕн чухлĕ сăмаллăх кӳнине манăн çемье пурнăçĕнче те лайăх курма пулать. Пирĕн çемьере 6 çын пурăнаççĕ. Партипе правительство тавар хакĕсене йӳнетме йышăнни мана хам ĕçлесе илекен ĕç укçинчен кашни уйăхра, вăтам шутпа, 80—90 тенкĕ перекетлеме май парать.

Партипе правительство пирĕн пурнăçа лайăхлатма тăрăшнине стахановла ĕçпе ответлесси совет çыннисен пурнăç йĕркине кĕнĕ. Эпир те, автомашина юсакан заводри рабочисемпе работницăсем, мастерсемпе техниксем, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, 1953 çулхи плана срокчен тултарассишĕн хамăрăн вăйсене хĕрхенмĕпĕр.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление колхозлă ял ĕçченĕсем вĕçĕмсĕр хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. «Новая жизнь» колхозра ĕçлекен трактор бригадин бригадирĕ Баранов юлташ çапла каларĕ:

— Партипе правительство пирĕн ырлăхшăн тăванла тăрăшнине кăтартакан çĕнĕ постановлени ялхуçалăх ĕçченĕсене тата пысăк хастарлăхпа ĕçлеме хавхалантарать. Пирĕн бригада çуракине тухма хатĕр. Колхозниксемпе алла-аллăн тытăнса ĕçлесе, эпир кăçалхи çуракине питĕ кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа ирттерме, вăйлă тырпул никĕсне хывма мĕн пур вăя хуратпăр.

Районти ялсенче çĕршер агитатор ĕççыннисене партипе правительствăн çĕнĕ постановленине ăнлантарса параççĕ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Механизаторсен сăмахĕ

СЕНТЕР. Предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе МТС-ра митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Вĕсенче ĕççыннисем таварсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетнишĕн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине тав тăваççĕ.

Машина-трактор станцийĕнчи митинга партбюро секретарĕ Карабаев юлташ уçрĕ. Вăл МТС директорне А. Кушников юлташа сăмах пачĕ.

— Партипе правительство ĕççыннисен пурнăçне культурине лайăхлатассишĕн тăрăшаççĕ, вĕсен интересне сыхлаççĕ,— терĕ Кушников юлташ.— Партипе правительство пирĕншĕн тăрăшнине эпир производствăра лайăх ĕçленипе ответлемелле, çуракине агротехника кăтартнă пек, пысăк пахалăхпа ирттермелле.

9-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Н. Горшков юлташ партипе правительствăна ĕççыннисемшĕн тăрăшнăшăн чĕререн тав тăвать, Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетессишĕн малашне те тăрăшса ĕçлеме сăмах парать.

— Пур бригадăсен те çуракине тухма хатĕр пулмалла,— терĕ вăл.— Манăн бригада паян Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза тухса каять. Эпир çуракине пысăк пахалăхпа ирттерме сăмах паратпăр.

Митингра пурĕ 4 çын тухса каларĕ. МТС коллективĕ апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне пур тракторсене те колхозсене çитерме, ака тумалли плана ытлашшипех тултарма сăмах пачĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

ЧКАЛОВСКИ, (Телефонпа). Районти ĕççыннисем партипе правительство апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен йышăннă постановление пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Колхоз хресченĕсемпе ялхуçалăх механизаторĕсем Ленин—Сталин партийĕпе Правительствăна халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн сталинла тăрăшнăшăн чĕререн тав тăваççĕ.

Паян ирех механизаторсен митингĕ пулчĕ. Унта партин Чкаловски райкомĕн секретарĕ Н. Фомин юлташ çапла каларĕ:

— Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен пĕрмаях ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшасси пирĕн партипе правительствăн тĕп закон пулса тăрать.

Механизаторсен савăнăçĕпе шухăш-кăмăлĕсене уççăн палăртса, митингра П. Князев, М. Быков, Д. Земцов юлташсем тухса каларĕç.

— Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни, — терĕ трактор бригадин бригадирĕ Д. Земцов юлташ,—вăл пирĕн социализмла Тăван çĕршыв хăватланса пынине кăтартса парать. Партипе правительство пирĕн пурнăça лайăхлатассишĕн сталинла тăрăшнине эпир ĕçпе, нумай хут лайăхрах ĕçленипе ответлĕпĕр.

И. МЕШКОВ.
В. КУЗНЕЦОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Механизаторсем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатассишĕн

СĔРПӲ. Машина-трактор станцийĕ иртнĕ çулта тракторсемпе тумалли ĕç планне, пĕтĕмĕшпе илсен, ирттерсе тултарчĕ. Çапах та кунта техникăпа туллин усă курнă теме çук. Пачах урăхла. МТС ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Вăл тырпул тухăçлăхне ӳстермелли плана чылай тултарман, 29 колхозран 2 колхоза çеç договорта кăтартнă ĕçсене туса панă. Дирекципе пуçламăш парторганизаци тата профсоюз комитечĕ механизаторсен ĕçне тĕрĕс йĕркелемен.

Парторганизацин тĕп çитменлĕхĕ вăл— партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе япăх туса пыни. Çакна КПСС райкомĕн çак кунсенче пулнă пленумĕ те тĕплĕн уçса палăртрĕ. Пленум ятарласах МТС-ри парторганизаци массăллă-политикăллă ĕçе епле туса пыни çинчен партбюро секретарĕн — директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕн И. Семенов юлташăн докладне сӳтсе яврĕ.

МТС-ри парторганизаци механизаторсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе пачах çителĕксĕр туса пырать, кадрсене коммунизмла воспитани парас, вĕсен политикăллă ăнланулăхне ӳстерес, çавна май вĕсене умра тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлама мобилизацилес тĕлĕшпе сахал ĕçлет.

— Механизаторсен политикăллă ăнланулăхĕ çителĕксĕрри вĕсем хушшинче государство пурлăхĕ çине çиелтен пăхакансем пуррине те курăнать. Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшманни, тракторсене ахаль тăратни, дисциплина япăххи — çаксем МТС-ри парторганизаци политикăллă-массăллă ĕçе ячĕшĕн туса пынинчен килнĕ. Куншăн, паллах, парти райкомĕ те айăплă,—терĕ пленумра КПСС райкомĕн членĕ А. Груздев юлташ.

Парторганизаци бригадăсенче калаçусем ирттерме агитаторсем уйăрнă. Анчах вĕсенчен чылайăшĕ нимĕн те тумасть, мĕншĕн тесен парторганизаци вĕсене пулăшмасть, семинарсемпе канашлусем сайра-хутра çеç ирттерет. МТС директорĕ Гурьев, партбюро секретарĕ Семенов, профсоюз комитечĕн председателĕ Смирнов юлташсем механизаторсем хушшинче докладсемпе лекцисем сахал ирттереççĕ.

Стена хаçачĕпе боевой листоксене вăхăтран вăхăта çеç кăлараççĕ. Хаçат витринисем çук. Кăтарту хăми çине ĕç итогĕсене çырса пымаççĕ. Иртнĕ çулта культурăллă-массăллă ĕçсем ирттерме 1.600 тенкĕ расходлама пăхнă пулнă, 457 тенкĕ çеç расходланă.

Хĕллехи вăхăтра ĕçлекенсене тивĕçлĕ условисем туса паман. Общежитинче çасамар, сивĕ, койкăсемпе матрацсем çук. Рабочисене пушă вăхăта культурăллă ирттерме хаçат-журнал çырăнса, шашка-шахмат, музыка инструменчĕсем илсе паман.

Партбюро коммунистсемпе кадрсен идейăллă-политикăллă пĕлĕвне хăпартас ĕç çине тивĕçлипе пăхмасть. Парти историне тата И. В. Сталин юлташ биографине вĕренмелли кружоксенче вĕренме 30 çынна хутшăнтарнă пулнă, анчах вĕсенчен чылайăшĕ занятисене çӳремест. Н. Степанов, К. Яковлев, И. Максимов, Л. Сергеев коммунистсем занятисенче сахал пулаççĕ, хăйсен пĕлĕвне ӳстерме тăрăшмаççĕ. Смирнов коммунист ертсе пыракан кружок уйрăмах япăх ĕçлет.

Парторганизаци механизаторсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйсăрлатни ремонт ĕçĕнче уйрăмах палăрчĕ. МТС тракторсемпе ытти машинăсене çуракине тухма хатĕрлесе çитермен-ха. Мартăн 25-мĕшĕ тĕлне тракторсем юсамалли плана пĕтĕмпе те 73 процент, плугсене юсассипе 70 процент çеç тултарнă. Сеялкăсемпе культиваторсене тата трактор лущильникĕсене юсасси те юлса пырать.

МТС колхозсене минераллă удобренисемпе тислĕк турттарас, вăрлăх сортлас, выльăхсем валли улăм вĕтетес ĕçсенче сахал пулăшать. МТС ку таранччен те кăçалхи çулшăн колхозсемпе договор туса пĕтермен.

Парторганизаци çураки вăхăтĕнче агитациллĕ-массăллă ĕçе организацилесси çинчен парти пухăвĕнче те сӳтсе явман, план та туман.

Пренире тухса калакансем парти райкомĕпе райсовет исполкомне машина-трактор станцине кирлĕ пек пулăшманшăн критиклерĕç. КПСС райкомĕн секретарĕсем, çавăн пекех райкомăн ытти работникĕсем, механизаторсем хушшинче сахал пулаççĕ, политикăллă докладсемпе лекцисем сайра ирттереççĕ.

МТС директорĕ Гурьев юлташ каланă тăрăх, парти райкомĕ МТС рольне ӳстерес, унта ĕçлекенсен ответлăхне хăпартас вырăнне тепĕр чухне вĕсен обязанноçĕсене хăй çине илме хăтланать.

Тухса калакансем çавăн пекех МТС-а запаслă пайсем парса тăрас тĕлĕшпе Глававтотракторосбытăн республикăри управленийĕ тата «Сельхозснаб» кантурĕ япăх ĕçленине палăртрĕç.

Пленум сӳтсе явнă ыйту тăрăх, çитес вăхăтра тумалли ĕçсене палăртса, тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Х. ЛИСИН.

Чугун çул работникĕсен хĕрлĕ кĕтесĕнче

Ĕç кунĕ пĕтнĕ хыççăн чугун çул çинче ĕçлекенсем хĕрлĕ кĕтесе пухăнма тапратрĕç. Дистанцинчи парторганизаци секретарĕ Иван Алексеевич Красичков юлташ, кунта пуринчен те малтан килсе ларнăскер, кашнинех хăна пек ăшшăн кĕтсе илет.

Хусан чугун çулĕн 5-мĕш дистанцинчи хĕрлĕ кĕтес вăл — рабочисен юратнă вырăнĕ. Кунта вĕсем час-часах тĕрлĕ лекцисемпе докладсем итлеççĕ, кинокартинăсем е концертсем кураççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ.

Акă, вĕсемпе дистанци начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Феодора Леонтьевна Маркова юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх «Çĕнĕ пилĕкçуллăхри чугун çул транспорчĕн ӳсĕмĕ» ятлă темăпа калаçу ирттерет.

— Партин XIX-мĕш съезчĕ коммунизм обществи тумалли пысăк программа йышăнчĕ,— тет агитатор.— Çав программăра совет халăхĕн пурнăçĕпе культурăллă шайне малалла татах та вăйлăн ӳстерме палăртнă. Партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн куллен тăрăшнине эпир хамăрăн Канаш хулипе чугун çул узелĕ ӳссе пынинчен те лайăх куратпăр.

Агитатор калаçăва пухăннă çынсене ĕлĕкхи пĕчĕк те тĕттĕм Шăхран ялĕ, партипе Совет правительстви куллен пулăшнине пула, Хусан чугун çулĕ çинчи пысăк чугун çул узелĕ тата пĕрмай ӳссе пыракан социализмла хула пулса тăни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

— Çĕнĕ пилĕкçуллăхра пирĕн хулара мĕнле çĕнĕ улшăнусем пулаççĕ?—ыйтрĕ çавăн хыççăн, калаçăва итлесе ларакансенчен пĕри.

— Нумай çĕнелсе улшăнать,— терĕ малалла агитатор.— Çитес çывăх çулсенчех хулара çĕнĕ урамсем ӳссе ларĕç, моторсем юсакан завода тĕпрен улăштарса çĕнетме, хулари апат-çимĕç комбиначĕнчен кондитерски фабрика тума тытăннă. Культура дворецĕ, вагонсем юсакан заводра клуб лартма тытăнаççĕ. Кăçалах акă çĕнĕ вокзал çуртне туса пĕтереççĕ, рабочисемпе чугун çул çинче ĕçлекенсем валли вуншар хваттер çурчĕ лартаççĕ.

Агитатор çĕнĕ пилĕкçуллăхра чугун çул транспорчĕ умне лартнă пысăк задачăсем çинчен витĕмлĕ сăмахсемпе каласа парать.

— Партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе, Сталин юлташăн съездра тухса каланă сăмахĕпе тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçĕпе хăйхаланса,— тет вăл,— Канаш чугун çул узелĕнче ĕçлекенсем çĕнĕ майсемпе резервсем шыраççĕ, вĕсемпе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Пăравуссен бригадисем хушшинче йывăр составсем ытларах илсе çӳрес тата топливо перекетлес тĕлĕшпе социализмла ăмăрту анлăн саралса кайрĕ. Кăçалхи икĕ уйăх хушшинче кăна вĕсем 630 йывăр состав илсе çӳренĕ, нормăран ирттерсе халăх хуçалăхĕ валли 99.533 тонна груз турттарнă. Нумай машинистсем нормăран ирттерсе 300—400 тонна таран тиенĕ поездсене илсе çӳреççĕ. Депори паллă машинистсем: Назаров, Пухов, Курылев, Бакулин тата ыттисем пăравуссен техникăллă хăвăртлăхĕн нормине тата вĕсен пĕр талăк хушшинчи çӳревне яланах ирттерсе тултараççĕ.

Юлашкинчен агитатор çĕнĕ пилĕк çуллăх заданийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарчĕ.

— Пирĕн дистанци Хусан чугун çулĕ çинче яланах пĕрремĕш е иккĕмĕш вырăн йышăннă, пире час-часах кусса çӳрекен Хĕрлĕ ялав панă. Юлашки уйăхсенче эпир çав ялава мĕншĕн хамăр алăран ятăмăр?—ыйтрĕ çамрăк рабочи.

— Нумаях пулмасть пирĕн дистанцинче пĕр рабочи ĕçре брак тунă, çавăнпа ялава пирĕнтен туртса илчĕç,— ăнлантарчĕ Маркова юлташ.

— Пĕр çын айăпĕшĕнех-и?

— Çавăншăнах. Мĕншĕн тесен, чугун çул транспорчĕн яланах сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлемелле. Чугун çул çинче пĕр брак туни те пĕтĕм ĕçе пăсма пултарать.

Сăмах сисмесĕрех тимсĕрлĕхпе çăвар карса ларакансене хирĕç кĕрешесси тата ĕç дисциплинине пĕрмай çирĕплетсе пырасси çине куçрĕ.

— Пирĕн кашни ĕçре революциллĕ сисĕмлĕхе çирĕплетсе пымалла, — терĕ агитатор.

Çакăн пек калаçусемпе лекцисем тата докладсем хĕрлĕ кĕтесре тăтăшах пулса иртеççĕ, унта рабочисем яланах йышлăн пухăнаççĕ. Лекцисемпе докладсем ирттернисĕр пуçне кунта кашни эрнерех кино кăтартаççĕ. Хĕрлĕ кĕтес çумĕнче виçĕ драмкружок (вырăс, чăваш тата ачасен драмкружокĕсем) ĕçлеççĕ, час-часах шашкăлла тата шахматла вылякансен турнирĕсем пулса иртеççĕ. Кунти библиотекăра 800 кĕнеке шутланать.

5-мĕш дистанцинчи хĕрлĕ кĕтес парторганизаци çирĕплетнĕ планпа ĕçлесе пырать. Вăл рабочисемпе служащисене тата инженерсемпе техниксене кану вăхăтне культурăллă ирттерме, вĕсен ĕçри опычĕпе пĕлĕвне ӳстерсе пырас ĕçре пысăк пулăшу парать.

С. АСЛАН.
Г. ИСАЕВ.

Редакцие килнĕ çыру

Чăваш ачисен картинисем мĕншĕн çук?

Доска умĕнче пĕчĕк хĕрача тăрать. Вăл совет çыннишĕн çывăх сăмахсене: «Эпир—миршĕн», тесе ӳкраинла çырать. Çак пĕчĕк картинăна Украинăри Луцк хулинче вĕренекен 14 çулхи Борей Климчук йывăç çине касса питĕ ăстан ӳкернĕ. Ăна ӳкерме-сăрлама юратакан ачасен Пĕтĕм Союзри 7-мĕш выставкинче кăтартрĕç. (Выставкăна ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕпе РСФСР Çутĕç министерстви йĕркеленĕ).

Тăтăшах пулса пыракан çак выставкăна ачасем 6 пин ытла ӳкерчĕк ярса панă. Чаплă художниксенчен ятарласа тунă комитет 800 произведение—чи лайăххисене—выставкăра кăтартма йышăнчĕ. Калас пулать, совет художникĕсен Союзĕн выставкăсем валли уйăрнă залĕсем нихçан та халиччен хи пек илемлĕ пулман. Пирĕн ачасене вĕресе тăракан социализмла пурнăç хăйĕн пĕтĕм пархатарлă хăвачĕпе интереслентерет. Вĕсем пурне те курасшăн, пĕлесшĕн, ӳкерсе кăтартасшăн. Вĕсен пултарулăхĕ питĕ нумай енлĕ! Выставкăра тĕрлĕ картинăсем, акварельсем, гравюрăсем, аппликацисем, панно, тĕрĕсем, чулран, шăмăран, йывăçран касса кăларнă фигурăсем, скульптурăсем, авса-çыхса тунă япаласем пур.

Ку ĕçе союзлă республикăсемпе автономиллĕ республикăсенчи тата крайсемпе облаçсенчи ачасем хĕрӳллĕн хутшăннă. Анчах Чăваш республикинчен вара пĕр ача картинине те ярса паман. Вĕсен ĕçĕсене иртнĕ выставкăсенче те кăтартман.

Ку мĕнрен килет-ха? Ку вăл ВЛКСМ Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Çутĕç министерстви тата Пионерсен çурчĕ ачасене художествăллă воспитани парас ĕç çине çиелтен пăхнинчен килет. Шкулсенчи, ача-пăча çурчĕсемпе ача сачĕсенчи картина ӳкермелли кружоксем талантлă ачасене шута илмеççĕ курăнать, вĕсен пултарулăхне ӳстерес, сарас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ курăнать. Кружок руководителĕсем пирĕн çĕршывра талантлă та пултарулă ачасем питĕ нумай иккенне манса кайнă пулас.

Халĕ çĕршывра ачасен пултарулăхне кăтартакан 8-мĕш выставкăна уçма хатĕрленеççĕ. Çав выставкăра Чăваш республикинчи шкул ачисемпе пионерсен художествăллă пултарулăхне кăтартмалла! Çакна эпир çирĕп шанса тăратпăр.

В. БРАЙКОВСКАЯ,
художница.

Мускав хули.

Хуранпа чугун ăçта илмелле?

Канаш хулинчи магазинсенче те, ялсенчи лавккасенче те 10—12 витре шыв кĕрекен, 170—250 тенкĕ тăракан хурансем пур. Вĕсем, паллах, пурнăçра кирлĕ савăт-сапасем. Анчах вĕсемпе килйыш валли апат пĕçерме çук. Килте апат хатĕрлеме пĕчĕкрех хурансемпе чугунсем кирлĕ. Çавăн пек чугун савăт-сапа районта ниçта та сутмаççĕ.

Суту-илӳ организацийĕсен çавăн пек хурансемпе чугунсем сутма тăрăшмалла.

И. МУКШИН.

Масар тирпейлĕ пулмалла

Етĕрне районĕнчи авалхи масарсенчен (çăвасенчен) пĕри вăл—Палтай масарĕ. Унăн лаптăкăшĕ 3 гектар ытларах.

Ĕлĕк виле тăприсем çине йывăçсем лартса ӳстернипе Палтай масарĕ вăрман пек курăнса ларатчĕ. Анчах та юлашки 10—15 çул хушшинче масар пĕтĕмпех япăхса çитрĕ. Халĕ унта улмуççисен, хурăнсен тункатисем те юлман, мĕн пурĕ те 19 йăмра çеç тăрса юлнă. Масар тавра тытнă картана тахçанах çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Палтай масарĕ тавра 14 ялпа карта тытса тухасси, йывăçсем лартасси йывăр ĕçех мар. Çак ĕçе райисполкомăн пуçармалла. Палтай тăврашĕнчи пур ял Совечĕсем те хутшăнсан, ку масара кĕске вăхăт хушшинчех йĕркелесе çитерме пулать.

М. ЗАХАРОВ.
И. ЛЬВОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Красноармейски районĕнчи «Урожай» колхозри çитменлĕхсем çинчен çыру килнĕччĕ. Колхоз председателĕ К. П. Репин киревсĕр ĕçленĕ, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса пынă. Редакци çырăва КПСС Красноармейски райкомне янăччĕ.

КПСС райкомĕ çапла пĕлтерчĕ: колхоз председательне Репина, государствăна тырă панă вăхăтра ултавлă ĕç тунăшăн, КПСС членĕн кандидачĕнчен кăларнă. Çавăн пекех ăна уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тунă. Колхоз членĕсен отчетпа суйлав пухăвĕ ăна колхоз председательне суйламан.

* * *

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Журавлев юлташ ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçлени, пĕрмаях ĕçни, колхозри çитменлĕхсемшĕн хăйне критиклекенсене хĕсме тытăнни çинчен çырнă çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ КПСС райкомне, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

КПСС Хĕрлĕ Чутай райкомĕ çырура асăннисене сӳтсе явни çинчен пĕлтерчĕ. Райком бюровĕ КПСС членне Журавлев юлташа ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçленĕшĕн, час-часах ĕçнĕшĕн тата критикăна хĕснĕшĕн хытă ятланă.

Стройкăсене материалсем ытларах парар!

Кирпĕч производствине аталантармалла

Çĕмĕрлери кирпĕч завочĕ 1952 çулхи производство планне ăнăçлă тултарчĕ. Халăх хуçалăхне строительство материалĕсем нумай кирлине шута илсе, завода кăçал пысăкрах задани панă. Унăн, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, продукци 52 процент ытларах туса кăлармалла. Задание ăнăçлă пурнăçлама сезона тимлĕн хатĕрленсе кĕтсе илес пулать. Завод коллективĕ оборудовани, кирпĕч типĕтмелли сарайсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсаса çитерме сăмах пачĕ.

Заводра кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕресе тăрать. Г. Лебедев тимĕрçĕ, И. Коршунов слесарь, В. Педин токарь ĕç нормине куллен 200—250 процент тултарса пыраççĕ. Иртнĕ çулсенче пресс трансмиссипе ĕçленĕ. Стахановецсем сĕннипе агрегатсене ĕçлеттерме электромоторсем тата редуктор лартрĕç. Малтан шутласа пăхнă тăрăх, çакă вăл çулсерен пиншер тенкĕ перекетлеме тата ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме май парать.

Тăм турттаракан вагонеткăсем хăвăртрах çÿреме пултарччăр тесе эстакада çинче тепĕр ансăр чугун çул юппи хывнă, çулсене юсанă. Çумăр çунă чухне тăм кăларса тиеме кансĕр. Иртнĕ çулсенче çумăр çунă вăхăтра завод ĕçлемесĕр тăнă. Карьерта çумăр каясран хÿтĕлеме пĕчĕк аслăксем тăваççĕ.

Иртнĕ сезонта завод кирпĕч типĕтнĕ çĕрте Сталинла преми лауреачĕ Картавцев юлташ меслечĕпе усă курнă. Çĕнĕ меслет чĕрĕ кирпĕчсене икĕ хут хăвăртрах типĕтме май панă. Халĕ завод коллективĕ çĕнĕ мелсем шухăшласа кăларас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Малта пыракан предприятисенче тăма пăспа ăшăтса кирпĕч тăваççĕ. Çапла туни кирпĕч пахалăхне лайăхлатать тата хăвăртрах типме пулăшать. Завод çитес сезонта пăспа усă курма хатĕрленет.

Завод ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Кирпĕч хĕртме вутă сахал хатĕрленĕ, рабочисене техникăна вĕрентес ĕçе йĕркелемен, кирпĕч пахалăхне лайăхлатма пулăшакан технологи процесне туса хатĕрлемен. Пĕлтĕр заводра брак чылай пулнă, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли задание пурнăçламан. Çак çитменлĕхе пĕтерес тесен заводăн технологие çĕнетсе лайăхлатмалла, кадрсен ăсталăхне ÿстермелле, малта пыракан предприятисемпе производство новаторĕсен опычĕпе анлăн усă курмалла.

Заводра вагонеткăсем сахал. Çавăн пирки ĕçре чăрмав пулать. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕ ун çинчен пĕлет, анчах завода вагонеткăсем уйăрса паман-ха.

Çĕмĕрле хули çултан-çул ÿссе пысăкланать. Сĕтел-пукан комбиначĕ тата ытти предприятисем çулсерен çĕнĕ цехсем, пурăнмалли çуртсем, культурăллă учрежденисем валли çĕнĕ çуртсем лартаççĕ. Колхозсем выльăх витисем тата тĕрлĕ çуртсем нумай тăваççĕ. Строительство ĕçĕ ăнăçлăн аталанса пырасси вырăнти материалсем, уйрăмах кирпĕч çителĕклĕ пулнинчен нумай килет. Çĕмĕрле райсовет исполкомĕ кирпĕч производствине аталантарма палăртрĕ. Мисчĕ райпромкомбиначĕ патĕнче паха тăм пур, ăна тĕпчесе пăхнă. Промкомбинатăн электростанци пур, производство каяшĕ кирпĕч хĕртнĕ çĕре кайма пултарать. Ĕлĕкрех Улхашри «Лесоруб» промартель паха кирпĕч туса кăларнă. Чăвашдревпромсоюза пăхăнса тăракан «Обод» артель локомобиль хăвачĕпе 25—30 процент çеç усă курать. Кунта та кирпĕч производстви организацилеме пулать.

Райсовет исполкомĕ районта кирпĕч производствине аталантарас тĕлĕшпе Чăваш АССР Госпланĕ умне ыйту лартнă, анчах вăл темшĕн пирĕн пуçарăва пурнăçа кĕртме тăрăшмасть. Районта кирпĕч хĕртме топливо çителĕклĕ. Пирĕн шухăшпа, нумай промартельсем кирпĕч туса кăларма пултараççĕ. Чăвашпромсовет, Чăвашдревпромсоюз тата Чăваштарпромсоюз руководителĕсем ĕçсыннисемпе колхозсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессине пысăка хурса хакламаççĕ, тупăш ытларах паракан е производство тĕлĕшĕнчен çăмăлрах япаласем ытларах туса кăларма тăрăшаççĕ.

Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем кирпĕч производстви уçма укçа-тенкĕ, материал кирлĕ, теме пултараççĕ. Ку—тĕрĕс. Анчах тăрăшсан материал та укçа-тенкĕ те тупма пулать. Государство банкĕ вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промартельсене çĕнĕ цехсем лартма укçа кивçен парать. Республикăри тивĕçлĕ организацисем пирĕн пуçарăва ырласса шанатпăр.

П. АНИСИМОВ,
Çĕмĕрле райсовет исполкомĕн председатель заместителĕ.

Сезона хăвăртрах хатĕрленсе çитер

Йĕпреç районĕнчи «Красный строитель» промыслă артель кирпĕч типĕтмелли ултă сарая юсаса çитернĕ. Кăçал 50 пин кирпĕч вырнаçмалăх тепĕр сарай тума палăртнă.

Артель кирпĕч çапмалли çĕнĕ пресс кÿрсе килнĕ, ăна вырнаçтарса лартма уйрăм çурт тăваççĕ. Кăçал кирпĕч хĕртмелли 14 камерăллă кăмака тăваççĕ. Ăна вырнаçтарма çĕнĕ çурт туса пĕтернĕ. Çитес уйăхсенче çĕнĕ электростанци ĕçе кĕрет.

Иртнĕ çулсенче икĕ хваттерлĕ тăватă çурт тунă. Пĕлтĕр вĕсене юсанă. Артельти коммунистсемпе комсомолецсем партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе материалĕсене вĕренеççĕ.

Артельте стахановецсем сахал мар. Сăмахран, М. Кассихина юлташа илер. Вăл артельте 1931 çултанпа ĕçлет, уйăхри задание 150 процент тултарса пырать. О. Краснова браковщица, А. Новикова съемщица, М. Носкова, М. Розина карьерта тăм кăларакансен бригадирĕсем, Г. Зайдуллин йывăç турттаракан т. ыт. юлташсем те уйăхри нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Кирпĕч хĕртекенсем Воронежри кирпĕч заводĕнчи Павел Дуванов мастер меслечĕпе анлăн усă курса ĕçлеççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе хавхаланса, артель коллективĕ социализмла обязательство илнĕ. Продукци туса кăлармалли плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе 50 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма, ĕç тухăçлăхне пилĕк процент ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне виçĕ процент йÿнетме, продукци пахалăхне лайăхлатма сăмах панă.

Артель ĕçĕнче çитменлĕхсемпе йывăрлăхсем те пур. Чăвашпромсоюз кирпĕч хĕртмелли кăмакана туса пĕтерме укçа уйăрса памасть. Кăмака тума шамотнăй кирпĕч, известь тата ытти материалсем кирлĕ. Анчах вĕсене илме артелĕн укçа çук.

Артеле кирпĕч тума чылай рабочи кирлĕ пулать. Артель правленийĕ рабочисем илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Йĕпреç райсовет исполкомĕ ăна сезона хатĕрленме япăх пулăшать.

Н. ПАВЛОВ.

Хамăр республикăра

Республика столицинче Шупашкарта пурăнмалли çуртсен хисепĕ çултан-çул нумайланса пырать.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Карл Маркс урамĕнче 38 хваттерлĕ çурт тăваççĕ.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Ача амăшĕсемшĕн тăрăшни

ПЕРВОМАЙСКИ. Районта нумай ачаллă тата пĕччен пурăнакан ача амăшĕсене 1952 çулта государство 1 миллион та 300 пин тенкĕ ытла пулăшу панă, 107 хĕрарăма орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозница, ача амăшĕ-героиня М. Ершова 11 ача пăхса ÿстерет. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ача амăшĕсене пулăшасси çинчен Указ кăларнăранпа вăл государствăран пĕтĕмпе 33 пин тенкĕ ытла пулăшу илнĕ.

Çавăн пекех Жданов ячĕпе тăракан колхозри колхозница, ача амăшĕ-героиня А. Игнатьева 10 ача пăхса ÿстерет. 1944 çултанпа вăл государствăран 17.250 тенкĕ пулăшу илнĕ.

Государствăран çавăн пек пысăк пулăшу илни вĕсене хăйсен ачисене пăхса ÿстерме, тивĕçлĕ воспитани пама пулăшать. М. Ершова колхозницăн пĕр ачи, А. Игнатьева колхозницăн икĕ ачи аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

М. Ершовăпа А. Игнатьева колхозницăсем пек ача амăшĕсем районта татах та чылай.

Ача амăшĕсемшĕн тăрăшнăшăн вĕсем партипе правительствăна чĕререн тав тăваççĕ.

В. АНТОНОВ.

Студентсен теориллĕ конференцийĕ

Чăвашсен педагогика институчĕн историпе филологи факультетĕнче «И. В. Сталин юлташ социализмран коммунизма куçмалли çулсемпе условисем çинчен» тема тăрăх теориллĕ конференци пулса иртрĕ. Конференци тăватă кун хушши пычĕ. М. Румянцев студент «Марксизм-ленинизм классикĕсем коммунизмăн икĕ фази çинчен», сталинла стипендиат А. Ильин—«И. В. Сталин юлташ социализмран коммунизма куçмалли тĕп условисем çинчен», З. Мишина студентка—«Коммунизм тăвас çĕрте совет государстви мĕнле вырăн йышăнни» тема тăрăх, сталинла стипендиат А. Горшков—«Ленин—Сталин партийĕ—пирĕн çĕршыври коммунизм тăвас ĕçĕн организаторĕ тата хавхалантаракане» темăсем тăрăх докладсем туса пачĕç.

Конференци пысăк активлăхпа иртрĕ. Чылай студентсем тухса каларĕç.

В. ШАЛТАЙКИН.

Республикăри шахмат турнирĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Çак кунсенче сĕтел-пукан комбиначĕн клубĕнче ялти çамрăксем хушшинче шахмăтла выляса республика чемпионĕн ятне илмелли ăмăрту пулчĕ. Ăмăртăва районсенче пулса иртнĕ турнирсенче мала тухнă 14 шахматист хутшăнчĕ. Малти вырăна Хĕрлĕ Чутай районĕн представителĕ В. Федоров йышăнчĕ. Вăл 13 очко илме май пур çĕртен 10 очко илчĕ. Иккĕмĕш вырăнта Романов (Сĕрпÿ районĕ), виççĕмĕш вырăнта Ягунов (Çĕмĕрле районĕ).

Ăмăртура мала тухнă шахматистсене хаклă парнесем тата дипломсем панă.

Бухгалтерсемпе счетоводсем вĕренсе тухнă

Çак кунсенче СССР Центральнăй статистика управленийĕн кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен управленийĕн Горькири вĕренÿ комбиначĕн Шупашкарти филиалĕнчен 48 бухгалтер тата 50 счетовод вĕренсе тухрĕç.

Питĕ лайăх вĕренсе тухнă бухгалтерсене грамотăсем панă. Грамота илнисем хушшинче С. Шадрин, В. Кочергин, И. Федоров, И. Романов, Р. Корышева, М. Боровская, А. Яковлева тата ытти юлташсем те пур.

Хальхи вăхăтра Горькири вĕренÿ комбиначĕн Шупашкарти филиалĕнче 180 çын вĕренет.

Аш-какай парса автомашина туяннă

МУРКАШ. Энгельс ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне çулран-çул ÿстерсе пырать. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана колхоз çулсерен ирттерсе тултарать. Кăçал колхоз государствăна аш-какай парса «ГАЗ-51» маркăллă автомашина тата автоприцеп туянчĕ. Колхозăн халĕ виçĕ автомашина.

П. ЯКОВЛЕВ.

ФЕЛЬЕТОН

Таркăн

Прокопьев Иван Прокопьевич Елчĕк районĕнчи Чăваш Тăрăм ялĕнче çуралса ÿснĕ.

— Çынсем авланаççĕ. Мана мĕншĕн авланма юрамасть? Авланас!—шухăшланă вăл çитĕнсе çитсен.

Шухăшланă—авланнă. Авлансан тепĕр куннех, арăмĕ çинчен маннă, унчченхи пекех хусах каччăсемпе пĕрле улахсем тăрăх çÿренĕ. Арăмĕ, паллах, кăмăлсăр пулнă.

— Авланнă çынна улах тăрăх чупни килĕшмест,—ÿпкелешнĕ арăмĕ. — Хăвна аван мар, ял çинче ятна яратăн.

«Тĕрĕссине калакан тăванне юрайман» теççĕ. Прокопьева та тĕрĕссине калакан арăмĕ юрайман. Пĕр ирхине вăл, çĕрĕпе таста çапкаланса çÿренĕ хыççăн килне таврăнсан, сывăракан арăмне вырăн çинчен сĕтĕрсе антарнă та... килĕнчен хăваласа кăларса янă.

Ку вунсакăр çул ĕлĕкрех пулса иртнĕ. 1939 çулта, салтака кайса килсен, ăна каллех авланас шухăш кĕнĕ.

Пĕринче вăл Екатерина Семеновнăна хăйĕн мăшăрĕ пулма сĕннĕ.

— Малтанхи арăму пек пулмĕ-и?—ыйтнă Екатерина Семеновна.

— Вăл çамрăклăх йăнăшĕ пулнă. Халĕ эпĕ арăм мĕн тĕрлĕ хаклине пĕлетĕп. Апла-капла пуласран ан хăра, алă çинче сĕклесе çÿренĕ пек усрăп,—ĕнентернĕ вăл.

Екатерина Семеновна ĕненнĕ, Прокопьева качча тухма килĕшнĕ.

Малти урапа ăсталла пăрăнать, кайри те çавăнталлах пырать мĕн. Прокопьев иккĕмĕш арăмпа та килĕштереймен. Екатерина Семеновна, йывăр пулсан та, тÿснĕ. Пĕрле пурăнасшăн пулнă.

— Малтанхи арăма хăваласа кăларса янăччĕ. Ку хăваласан та каймасть. Капла пулмасть, хамăн куç курми çĕре тухса тарас пулĕ,—шутланă Прокопьев.

Прокопьев ниçта та тарса ĕлкĕреймен. Вăрçă пуçлансан ăна фронта илсе кайнă.

— Фронтра пусĕнех «çухалма» пулать,—тенĕ вăл хăйĕн ăшĕнче.—Никам та шыраса тупаймĕ.

Чăнах та вăл «çухалать». Çартан киле таврăнмасть.

...Прокопьев пурнăçра пĕр йăлана кăна пăхăнать: алăк урлă каçсан—арçын авланман. Йĕпреçре ĕçленĕ вăхăтра вăл виççĕмĕш хут авланать.

Упăшки ăçтине пĕлсен, Екатерина Семеновна икĕ ачине пăхса ÿстерме пулăшу ыйтса çыру хыççăн çыру çырать. Анчах, тем тĕрлĕ тилмĕрсе çырсан та, Прокопьев ăна сасă памасть. Вăл каллех мĕнле те пулин «çухалма» тăрăшать. Йĕпреçри пĕр учрежденири ĕçрен тухса, Вăрмарти хатĕрлев пунктне ĕçлеме кĕрет. Çапла вăл иккĕмĕш хут «çухалать».

1948 çулта, упăшки ăçтине йĕрлесе тупнă хыççăн, арăмĕ Елчĕкри халăх суднне Прокопьевран алимент шырама ыйтса заявлени парать.

— Суд алимент тÿлеттермелле турĕ. Халĕ ачасене ÿстерме пулать,—хăйне хăй лăплантарнă Екатерина Семеновна.

Кăлăхах лăпланнă-мĕн вăл! Суд решенийĕ тăрăх никам та алимент шыраса парасшăн пулман ăна. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕпе республикăри прокурор хутшăннă хыççăн тин Вăрмар районĕнчи судпа прокуратурăра ĕçлекенсем, икĕ çул выртнипе тусан айне пулнă хутсене туртса кăларса, Прокопьева алимент тÿлеттерме пуçланă.

Пĕр вăхăт алимент тÿлесе пурăннă хыççăн, Прокопьев каллех «çухалать». Вăрмар районĕнчи 1-мĕш участокри халăх судĕнче ĕçлекенсем ытла та вăйсăр куçлă çынсем пулмалла: вĕсем Вăрмар урамĕ тăрăх ÿсĕр çапкаланса çÿрекен Прокопьева нихăшĕ те «курман». Тен, курсан та курмăш пулнă пулĕ, пĕлейместпĕр. Анчах та 1951 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче Екатерина Семеновнăна халăх судĕнчен: «Прокопьев Вăрмартан тухса кайнă, вăл ăçта пурăннине пĕлместпĕр», тесе хут ярса панă.

Екатерина Семеновна упăшки «çухалма» юратнине лайăх пĕлет. Çавăнпа халăх судĕнчен ярса панă хута чĕрне хури чухлĕ те ĕненмен. Иртнĕ çулхи октябрьте вăл Вăрмар районĕнчи прокурор патне Прокопьевран алимент илме пулăшма ыйтса çыру çырать. Учрежденисенчи бюрократсемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешме тивĕçлĕ прокурор Прокопьева чĕнсе каласма та, хăй мĕн туни çинчен Екатерина Семеновна патне çырса пĕлтерме те вăхăт тупайман.

— Çыру вĕççĕн ĕç тухмасть. Хамăн кайса килес пулĕ,—тенĕ прокурортан нимĕнле хыпар та кĕтсе илейменнипе аптăранă Екатерина Семеновна.

Вара хăйсен ялĕнчен утмăл километрти Вăрмара тухса утнă.

Куçа-куçăн курса калаçнине мĕн çиттĕр! Прокурор çийĕнчех Прокопьева чĕнсе илсе ятлама пуçланă.

— Халех ачусем валли виççĕр тенкĕ укçа парса яр. Унсăрăн алимент тÿлессинчен пăрăнса çÿренĕшĕн судпа айăплатпăр,—тенĕ прокурор.

Прокурорăн алимент тÿлессинчен пăрăнса çÿрекен Прокопьева суд умне тăратасси çинчен нумай маларах аса илмелле пулнă ĕнтĕ. Екатерина Семеновнăшăн каярах юлса каланă сăмахсем те нитĕ паха пек туйăннă.

Прокопьев çийĕнчех укçа илме тухса чупнă.

— Халлĕхе аллă тенкĕ кăна парса яратăп-ха. Ыттине çĕнĕ çула кĕриччен парса тататăп,—шантарнă вăл, пăртак çÿренĕ хыççăн прокурор пÿлĕмне пырса кĕрсе.

Прокурор та Екатерина Семеновнăна малашне упăшкинчен алимент илсе паратпăрах, тесе шантарнă.

Екатерина Семеновна килне таврăннă.

Кăçалхи февралĕн 7-мĕшĕнче письмоносец Екатерина Семеновнăна кăвак конверт парса хăварчĕ.

— Упăшкана алимент тÿлеттерме пуçлани çинчен пĕлтереççĕ пулĕ-ха,—шухăшланă вăл конверт çинчи аялти адрĕсе курсан.

Çырăва вуласа тухнă хыççăн, савăнас вырăнне, икĕ куçĕнчен куççулĕ шăпăртатса юхнă. «На Ваше заявление от 20.X.1952 года сообщаю, что Ваш муж Прокопьев И. П. с апреля 1952 г. не работает и никакого имущества не имеет», тесе пĕлтернĕ прокурор хăй ярса панă 220-мĕш номерлĕ хутра.

— Э-ха-ха! Ашшĕ тарса çÿрет. Прокурор алимент илме пулăшмасть. Кампа тата калаçас?—хурланнă хушăра ачисене пуçĕнчен шăлса ачашланă вăл.

Прокурор «алă пуснă та—ĕçĕ пĕтнĕ» тесе кăна çырнă вăл хута. Прокопьев ниçта та ĕçлемест тени—суя сăмах. Эпир тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, Прокопьев пĕр кун та пушă ларман. Чăнах та, вăл штатри ĕçсенче пулман. Анчах та чугун çул çинче вагон пушатнă çĕрте ĕçлесе кашни кун аллăшар тенкĕрен кая мар укçа илнĕ. Прокурор ведомость çине алă пусса илекен укçана кăна ĕç укçи вырăнне хурать пулмалла. Çавăнпа вăл, закона пĕлмен çын пек, Прокопьева алимент тÿлеттермен.

Прокопьевăн нимĕнле пурлăх та çук тенине те ĕненме юрамасть, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн пурлăхне Вăрмар районне качча кайнă йăмăкĕ патне куçарнă.

Прокопьевăн хÿри кĕске. Ăна халĕ Вăрмарта шыраса тупма çук. Алимент тÿлеттерессинчен хăраса, вăл Вăрмартан Йĕпреçе тарнă. Йĕпреç районĕнчи судпа прокуратурăра ĕçлекенсем Вăрмар районĕнчисем пек чул чĕреллĕ мар пулĕ тесе шутлатпăр эпир.

С. ПАВЛОВ.

МТС çураки умĕн

Йĕпреç МТС-ĕ иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕ. Тракторпа тумалли тĕп ĕçсене договорпа палăртнă срокенче пурнăçланă. Механизаторсем хушшинчи ăмăртăва анлăн сарса яни тата малта пыракан меслетсемпе усă курни тракторпа тăвакан ĕçĕн хăйне ларакан хакне йÿнетме пулăшрĕ. Мĕнпур ĕçсене тума тăкак планпа пăхнинчен 25 пин тенкĕ каярах пулнă. МТС колхозсене 35 тĕрлĕ ĕç туса панă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене тунă вăхăтрах механизаторсем кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтра тракторсене, комбайнсене, ытти машинăсене юсама тĕплĕн хатĕрленнĕ. Станоксене, мотора тĕрĕслемеллипе аватмалли стендсене юсаса вырнаçтарса лартнă. Кашни узел валли приборсемпе инструментсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Иртнĕ çулта «Сельхозснаб» кирлĕ пайсене вăхăтра кÿрсе килеймерĕ. Çавна шута илсе мастерскойра ĕçлекенсем августпа сентябрь уйăхĕсенчех кивĕ пайсене юсаса тепĕр хут усă курмалла тума пуçланă. Часах вĕсем СХТЗ, СТЗ-НАТИ, ДТ-54 тракторсене юсама кирлĕ таран поршень групписем хатĕрлесе хучĕç. Юсав ĕçĕ пуçланас умĕн хăш машинăн мĕнле пайне юсамаллине йĕлтах шута илнĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче тракторсене юсама пуçларăмăр. Вĕсене узелсенче тата çĕнĕ технологи тăрăх юсанă. Механизаторсем малтанхи кунсенчех машинăсене пысăк пахалăхпа юсас тата юсав ĕçĕсене срокчен вĕçлес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. ДТ-54 тракторсене юсасси пирĕншĕн çĕнĕ ĕç-ха. Çавăнпа вĕсене юсассине уйрăммăнах тимлĕн тума тăрăшнă. Ĕçе тытăнсанах çав тракторсем валли вкладышсем çукки плана вăхăтра пурнăçлама чарса тăрассăн туйăнатчĕ. Анчах та главнăй механик С. Валуев, механик-контролер А. Новиков, мастерской заведующийĕ Г. Мамонтов тата участокри механик П. Михайлов юлташсен ăсталăхĕпе творчествăллă пуçарăвĕ йывăрлăхсене вăхăтра сирсе яма пулăшрĕ. Вĕсем кивĕ вкладышсене хамăрăн мастерскойрах юсаса тепĕр хут усă курмалла турĕç.

МТС дирекцийĕ, партипе профсоюз организацийĕсем механизаторсене пур условисем те туса пама тăрăшнă. Кашни çын валли койка, матрац, минтер хатĕрленĕ, тумбочка лартса панă. Лайăх йĕркеленĕ хĕрлĕ кĕтесре лекцисемпе докладсем ирттернĕ, трактористсен пĕлĕвне ÿстерме кружок ĕçленĕ. Эрнере пĕр хутчен кая мар малта пыракан меслетсемпе паллашма пулăшакан кино кăтартнă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ МТС-сем умĕнче тăракан задачăсене уçăмлăн кăтартса пачĕ. Съезд решенийĕсене тĕплĕн вĕренни механизаторсене тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. МТС тракторсемпе ытти машинăсене февралĕн 20-мĕшне пĕтĕмпех юсаса пĕтерчĕ. Халĕ узелсенче комбайнсене юсама пуçланă. Майăн 1-мĕшĕччен комбайнсемпе молотилкăсене те юсаса пĕтеретпĕр.

МТС коллективĕ хĕрсех ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă пурнăçлама хатĕрленет. Пур тракторсене те колхозсене куçарнă. Çураки ирттерме çителĕклĕ таран çунтармалли япаласем турттарса хунă. Иртнĕ çулсенче эпир ăмăртăва механизаторсене кăна хутшăнтарма тăрăшнă. Çавна пула тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе хамăр çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлаймастăмăр. Райсовет исполкомĕпе КПСС райкомĕ пире çак пысăк çитменлĕхе пĕтерме пулăшаççĕ. Вĕсем колхозсемпе трактор бригадисене коммунистсемпе ялхуçалăх специалисчĕсене ячĕç. Ялана юлташсем колхозри активпа механизаторсене пĕрле пухса производствăллă канашлу ирттереççĕ. Унта колхозниксемпе трактористсем çуракине хăвăртрах ирттерсе тырпул тухăçлăхне ÿстерес, туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсем çинчен тĕплĕн калаçса татăлаççĕ. Чылай колхозсенче кун пек канашлусем ирттернĕ ĕнтĕ. Вăл канашлусенче тракторсем патне шыв, вăрлăх турттарса тăракан çынсемпе туртăм вăйĕ уйăрса çирĕплетеççĕ. Уйăрса панă çынсемпе туртăм вăйне трактор бригадин бригадирне кăна пăхăнмалла йĕрке тăваççĕ.

МТС паркĕ çĕнĕ техникăпа пуянланнă май кадрсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе чылай ĕç туса ирттермелле пулчĕ. Кăçал эпир Канашри механизаци шкулĕнче тата хамăрăн вăйпа 47 тракторист вĕрентсе кăларнă. Кунсăр пуçне 54 тракторист, 12 бригадир, 12 бригадир помощникĕ, 12 учетчик курсра вĕренсе хăйсен квалификацине ÿстернĕ. 16 çын Канашри механизаторсен шкулĕнче комбайнера вĕренеççĕ. Вĕсенчен 11-шĕ самоходнăй комбайнпа ĕçлеме пуçласçĕ. Комбайнер помощникĕ пулса курсран вĕренсе тухнă колхозниксем ĕçлеççĕ.

Тракторпа тăвакан ĕçĕн пахалăхĕ прицепщиксенчен нумай килет. Çавăнпа прицепщик пулма вăл ĕçе лайăх пĕлекен çынсене кăна лартатпăр. 112 прицепщикран 68-шĕ трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă, 44-шĕ ятарласа прицепщиксен курсĕнче вĕреннĕ.

Колхозсемпе МТС хушшинчи туслăха çирĕплетни, механизаторсен квалификацине ÿстерсе пыни пире партин съезчĕ çĕнĕ пилĕкçуллăхра ĕç тухăçлăхне 50 процентран кая мар ÿстерме хушнине ăнăçлăн пурнăçлама май парать. Кунпа пĕрлех тырпул тухăçлăхне ÿстерес тата выльăх-чĕрлĕхсен йышне нумайлатса пысăк тупăш паракан тăвас задачăна пурнăçлама та çăмăлтарах пулать.

Кăçал МТС-ăн колхозсене нумай ĕçсем туса памалла. Вĕсенчен чылайăшне кăçал пуçласа тăватпăр. Сăмахран, колхозсене машинăпа 60 гектар махорка лартса памалла. Иртнĕ çулта колхозсем махорка калчине лайăх хатĕрлеймен тата механизаторсем машинăпа ĕçлеме пĕлмен пирки ăнăçу пысăк пулмарĕ. Пĕлтĕрхи йăнăшсене текех тăвас мар тесе, кăçал ĕçе урăхла организацилетпĕр. Махорка лартакан колхозсене агрономсем уйăрса панă. Вĕсем колхозниксене машинăпа лартма юрăхлă махорка калчисем акса ÿстерме пулăшаççĕ. Кунпа пĕрлех чи лайăх комбайнерсене махорка лартакан машинăпа ĕçлеме вĕрентрĕмĕр. Махорка лартмалли вырăна кĕркунне 25—27 сантиметр тарăнăш çĕртме туса хăварнă. Çĕр пичĕ кушсанах ăна çÿрелетпĕр. Колхозсем махорка лартмалли вырăн валли минераллă удобренисем хатĕрлесе хунă.

Çĕрулмине тăваткал кĕтеслĕ майпа лартасси тата пĕрчĕллĕ тырăсене ансăр ретлĕн акасси (узкорядный сев) те пирĕншĕн çĕнĕ ĕç-ха. Пирĕн тата çав ĕçсене тума кирлĕ машинăсем çук. Çавăнпа механизаторсем трактор плугĕсемпе окучниксене çĕрулмине тăваткал кĕтеслĕ майпа лартма юрăхлă тума тытăнчĕç. Кунпа пĕрлех йăран хушшине çемçетмелли хатĕрсем тăваççĕ. Вĕсемех ансăр ретлĕн акма икĕ сеялка хатĕрлерĕç.

Механизаторсем çĕнĕ ĕçсене тăвас тĕлĕшпе малта пыракан МТС-сен опычĕпе паллашаççĕ. Ку ĕçе вĕсем колхозниксене те вĕрентме тăрăшаççĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн ĕç колхозниксемпе пĕрле тусан кăна ăнăçлă пулма пултарать.

Тÿрех каламалла, Ялхуçалăх министерстви план панă чухне планра палăртнă ĕçе тума МТС-ăн машинăсем пуррипе çуккине пăхас хисепе илмест. Çавна пула тепĕр чухне колхозсемпе тунă договора пурнăçлаймастпăр. План панă пулсан та эпир, кирлĕ машинăсем çук пирки, колхозсене курăк акса, вĕтлĕх (кустарник) кăкласа, тымар кăларса парас тĕлĕшпе пулăшма пултараймастпăр. Çавăн пекех, республикăна навесной культиваторсемпе тракторпа утă пуçтармалли кĕреплесем те кÿрсе килмеççĕ.

Колхозсене кайнă тракторсем пушă лармаççĕ. Вĕсем артельсене 2.000 тонна ытла вырăнти тата минераллă удобренисем турттарса панă. Калинин ячĕпе, Молотов ячĕпе, Ленин ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан, «Большевик» т. ыт. колхозсене обществăллă çурт-йĕрсем тума строительство материалĕсем кÿрсе килме пулăшнă. Тăватă агрегат фермăри выльăхсем валли утă-улăм тата тымарçимĕçсем тураса парас тĕлĕшпе ĕçлет. МТС пулăшма пуçланăранпа чылай колхозсенче выльăхсене тăрантса усрасси аваланчĕ, ĕнесем сĕт хушрĕç. Сăмахран, «Заря» колхозăн ĕнисем хĕллехи вăхăтра сĕт кунне 3—4-шар литр кăна панă. Турăнă улăма запарникре пĕçерсе çитерме пуçласан 8—10 литр таран паракан пулнă.

Хĕллехи вăхăтра пирĕн колхозсене 5 кормозапарник лартса памаллаччĕ. Эпир 11 лартса патăмăр. Апла пулсан та Димитров ячĕпе тăракан, «Красный партизан» артельсенче улăма тураса тата запарникре пĕçерсе çитерме тăрăшмаççĕ-ха. Çавна пула апат нумай пĕтет тата выльăхсем паракан тухăç питĕ сахал.

Специалистсем те колхозсен руководителĕсене выльăхсене лайăхрах пăхса усрама хистемеççĕ.

Мартăн малтанхи кунĕсенче районти механизаторсен канашлăвĕнче кăçал тумалли ĕçсем çинчен сÿтсе яврăмăр. Унта колхоз председателĕсемпе уй-хир бригадисен бригадирĕсем те пулчĕç. Иртнĕ кунсенче КПСС райкомĕн пленумĕ МТС-ра партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ организациллĕ ĕçе мĕнле туса пыни çинчен сÿтсе яврĕ. Канашлура та, пленумра та МТС ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕç.

Пирĕн ĕçри тĕп çитменлĕх вăл—колхозсене планпа палăртнă чухлĕ тырă туса илме пулăшайманни. Тырă тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарайманни колхозсенчен те нумай килнĕ. Вĕсем агротехникăллă мероприятисене пурнăçлас, пусă çаврăнăшне йĕркелес, тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. МТС та çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе сахал кĕрешнĕ. Çавăн пекех эпир малта пыракансен опытне тĕпчесе пĕлсе сарасси çине те çителĕксĕр пăхнă. Сăмахран, иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче М. Михайлов комбайнер 600 гектара яхăн вырса пуçтарнă, сур тонна бензин перекетленĕ. В. Егоров тракторист хăйĕн сменинче 900 гектар сухаланă, 603 килограмм крассын перекетленĕ. Анчах та вĕсен опытне сарса ыттисене тухăçлă ĕçлеме вĕрентмен.

МТС коллективĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăна лайăх ăнланса тăвать. Кăçал эпир хамăрăн ĕçре татăклă улшăну тăватпăр. Пирĕн ĕçри улшăну колхозсене те тырпул туса илес тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе нихçан пулман çитĕнÿ тума пулăшĕ.

А. КУРМАНИН,
Йĕпреç МТС директорĕ.

Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чжоу Энь-Лай пĕлтерни

ПЕКИН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви Корейăри перемири çинчен тăракан ыйту пирки Китай Халăх Республикин Государство администраци совечĕн премьерĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чжоу Энь-лай çакăн пек пĕлтернине пичетлесе кăларнă:

«Китай Халăх республикин Центральнăй Халăх Правительстви тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви Пĕрлешнĕ Нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнăй командующийĕ генерал Марк Кларк вăрçă пынă вăхăтра тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене икĕ енĕнне те улăштарса илес пирки 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче кăларса тăратнă сĕнĕве пĕрле пăхса тухнă хыççăн çакăн пек шухăш патне пырса тухнă: çак ыйтăва Женевăра 1949 çулта йышăннă конвенцин 109-мĕш статьи тăрăх йĕркелесе яма пулать. Тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс йĕркелени, нимĕн иккĕленмелли те çук, тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва пĕр чăрмавсăр татса парас ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та эпир Корейăра вăрçă ĕçĕсене чарса лартмалла тăвас тата перемири çинчен килĕшӳ тăвас тĕллевпе тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва йĕркелесе яма вăхăт çитнĕ тесе шутлатпăр.

Китай Халăх Республикин Правительстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви çапла шутлаççĕ: Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен перемири çинчен пыракан калаçăва хутшăнакан делегачĕсен тата Пĕрлешнĕ Нацисен командованийĕн перемири çинчен пыракан калаçăва хутшăнакан делегачĕсен тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илесси çинчен тăракан ыйту пирки халех калаçусем пуçласа ямалла тата тыткăна илнисем çинчен тăракан ыйтăва пĕтĕмĕшпе йĕркелемелли майсене шырама тытăнмалла.

Корейăра перемири çинчен пĕр çулталăк хушши ытла пынă калаçусем Корейăра перемири тума кирлĕ никĕсе хывнă. Кэсонра тата Паньмыньчжоньра калаçусем пынă вăхăтра икĕ енĕн делегачĕсем тыткăна илнисем çинчен тăракан ыйтусăр пуçне ытти мĕнпур ыйтусем тăрăх калаçса татăлчĕç. Пĕррремĕшĕнчен, Корейăра вăрçă ĕçне чарса лартас ыйту тăрăх,—ку ыйтупа ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче интересленет,—икĕ енĕ те çакăн пирки калаçса татăлнă: «Перемири çинчен тунă çак килĕшĕве алă пуснă хыççăн 12 сехет хушшинче пĕр-пĕринпе вăрçакан енĕсен командующийĕсен хăйсен контролĕнче тăракан мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсене, вăл шутра тип çĕр çинчи мĕнпур вăйсене, тинĕс-çар, сывлăш-çар вăйĕсене вăрçă ĕçĕсене пĕтĕмпех чарса лартма приказ памалла» (Корейăри перемири çинчен тунă килĕшӳ проекчĕн 12-мĕш параграфĕ). Иккĕмĕшĕнчен, икĕ енĕ те перемири тумалли тĕп условисем пирки калаçса татăлнă. Демаркаци линине палăртас тата демилитаризаци зонине туса хурас ыйту тăрăх икĕ енĕ те çапла тума килĕшнĕ: икĕ енĕн çарĕсем перемири çинчен тунă килĕшӳ вăй илнĕ тапхăрта йышăнакан лини демаркаци линийĕ пулса тăмалла, «икĕ енĕн те çав линирен икшер километр таран каялла чакмалла, çапла вара пĕр-пĕрне хирĕçле çарсем хушшинче вăрçă ĕçĕсене тепĕр хут пуçланасси патне илсе çитерме пултаракан хирĕçӳсене сирсе ярас тĕллевпе демилитаризациленĕ зона... буфернăй зона тума май пултăр» (перемири çинчен тунă килĕшӳ проекчĕн 1-мĕш параграфĕ). Перемири çинчен тунă килĕшĕве пурнăçланине сăнаса тăрас тата перемири çинчен тунă килĕшĕве пăснине йĕркелесе тăрас ыйту пирки икĕ енĕ çапла калаçса татăлнă: перемири тума çар комиссийĕ туса хумалла. Комиссие Корея Халăх çарĕн верховнăй командующийĕпе Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ пĕрле уйăрнă пилĕк аслă офицер тата Пĕрлешнĕ Нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ уйăрса лартнă пилĕк аслă офицер кĕмелле. Перемири çинчен тунă килĕшĕве пурнăçланине тĕрĕслесе тăрассишĕн, вăл шутра, тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриацилес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси ĕçне тĕрĕслесе тата ертсе пырассишĕн те, перемири çинчен тунă килĕшĕве пăснине калаçусем иртернипе йĕркелесе ярассишĕн çав комисси ответлă пулса тăрать (перемири çинчен тунă килĕшӳ проекчĕн 19, 20, 24, 25 тата 56-мĕш параграфĕсем). Икĕ енĕ те çавăн пекех тата нейтральнăй çĕршывсен представителĕсенчен сăнаса тăракан комисси тума кирлĕ тесе калаçса татăлнă. Çак комиссие нейтральнăй çĕршывсем—Польшăпа Чехословаки уйăрса лартнă икĕ аслă офицер представительсем пулса кĕмелле. Вĕсене Корея Халăх çарĕн верховнăй командующийĕпе Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ пĕрле суйласа илеççĕ. Комиссие тата нейтральнăй çĕршывсем—Швеципе Швейцари уйăрса лартнă икĕ офицер представительсем пулса кĕмелле. Вĕсене Пĕрлешнĕ Нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ суйласа илет. Çак комисси сăнаса тăнипе инспекци ушкăнсем тумалла. Ку ушкăнсене çӳлте асăннă нейтральнăй çĕршывсем уйăрнă офицерсем кĕреççĕ. Инспекци ушкăнĕсем Çурçĕр Корейăра Синьыйчжу, Чхончжинь, Хыннам, Маньпхочжинь, Синьаньчжу пункчĕсенче тата Кăнтăр Корейăра Инчон, Тэгу, Пусан, Канным тата Куньсань пункчĕсенче пулаççĕ. Вĕсем Корейăна икĕ енĕ те çар çыннисем, боевой самолетсем, бронемашинăсем, хĕçпăшалсем, боеприпассем çĕнĕрен илсе пыма чарасси çинчен тунă условисене пурнăçланине тĕрĕслесе тăраççĕ. Перемири çинчен тунă килĕшĕве пăсни çинчен пĕлсен, çав ушкăнсем вырăнсене тухса ятарласа тĕрĕслеме пултараççĕ (перемири çинчен тунă килĕшӳ проекчĕн 36, 37, 40, 41, 42 тата 43-мĕш параграфĕсем). Кунсăр пуçне икĕ енĕ те çакăн пек калаçса татăлнă: «икĕ енĕн çар командующийĕсем çакăнпа икĕ енĕн çĕршывĕсен интересленекен правительствисене перемири çинчен тунă килĕшӳ çине алă пуснă тата вăл вăя кĕнĕ хыççăн виçĕ уйăх хушшинче икĕ енĕн аслăрах представителĕсен политикăллă конференцине пухма сĕнеççĕ. Вăл представительсене Корейăран мĕнпур ют çĕршыв çарĕсене илсе тухасси çинчен тата Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелесси çинчен тата ыттисем çинчен тăракан ыйтусене калаçу иртернипе йĕркелеме уйăраççĕ (перемири çинчен тунă килĕшӳ проекчĕн 60-мĕш параграфĕ).

Çӳлте кăтартса панăччĕ ĕнтĕ, Корейăра перемири тăвасси çинчен пыракан калаçура пĕр ыйту кăна—тыткăна илнĕ çар çыннисем пирки тăракан ыйту кăна—Корейăра перемири тума кансĕрлет. Тыткăна илнĕ çар çыннисем пирки тăракан ыйту тĕлĕшпе те икĕ енĕ перемири тумалли килĕшӳ проекчĕн мĕнпур положенийĕсем тăрăх, тыткăна илнĕ çынсен тĕлĕшпе туса иртермелли ĕçсем тĕлĕшпе калаçса татăлнă. Тыткăна илнисене репатриацилесси çинчен тăракан ыйту пирки çеç калаçса татăлман. Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусене 5 уйăх каярах чарса лартман пулсан, тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриацилесси çинчен тăракан çак ыйтăва та тахçанах татса пама май пулнă.

Халĕ, Пĕрлешнĕ Нацисен командованийĕ тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илес ыйтăва Женева конвенцийĕн 109-мĕш статьи тăрăх йĕркелеме сĕнӳ пачĕ пулсан, эпир çапла шутлатпăр: тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс йĕркеленĕ хыççăн, тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва пĕр чăрмавсăр татса парасси кирлĕ ĕç пулса тăрать. Кунта икĕ енĕ те Корейăра перемири тăвас тĕлĕшпе пĕр-пĕрин шухăшне чăннипех чĕререн ăнланни кирлĕ.

Тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан ыйту пирки Китай Халăх Республикин Правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви яланах çапла шутланă, халĕ те çапла шутлаççĕ: çак ыйтăва тыткăна илнĕ çар çыннисене ирĕке кăларнипе тата вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă хыççăн тыткăна илнĕ çар çыннисене нимĕн тăхтаса тămaсăр репатриаци туннипе кăна тивĕçлипе татса пама пулать. 1949 çулта Женевăра йышăннă конвенцин положенийĕсем тăрăх, уйрăммăн илсен çав конвенцин 118-мĕш статьин положенийĕсем тăрăх туса иртермелле. Анчах та çак ыйту пирки икĕ енĕ хушшинче тухса тăнă хирĕçӳсем Корейăра перемири тума чарса тăракан пĕртен-пĕр чăрмав пулнине шута илсе тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем мир тăвассишĕн чĕререн тăрăшнине шута илсе, Китай Халăх Республикин Правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви, яланхи пекех мир политики тытса пырса, Корейăра хăвăртрах перемири тума тăрăшса, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама, çапла вара пĕтĕм тĕнчере мир ĕçне сыхласа хăварма тата тĕреклетме тăрăшса, Корейăра перемири тăвас тĕллевпе çак ыйтури хирĕçӳсене сирсе яма кирлĕ ĕçсем туса иртерме хатĕр. Çак тĕллевпе Китай Халăх Республикин Правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви çапла сĕнеççĕ: калаçура икĕ енĕн те вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăн çийĕнчех хăйсем аллинче тăракан тыткăнри çар çыннисене, хăйсен тăван çĕршывне каялла таврăнма тăрăшакан мĕнпур çар çыннисене репатриацилеме килĕшмелле. Тыткăна илнĕ ытти çар çыннисене, вĕсене репатриацилесси çинчен тăракан ыйтăва тӳрĕ майпа татса пама, нейтральнăй государство аллине памалла.

Тата кунта çакна палăртни те кирлĕ. Çак сĕнĕве тăратса, эпир, Женева конвенцийĕн 118-мĕш статьинче кăтартнă пек, тыткăна илнĕ çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăн çийĕнчех ирĕке кăлармалли тата репатриаци тумалли принципран каялла чакмастпăр, эпир çавăн пекех Пĕрлешнĕ Нацисен командованийĕ тыткăнри çынсем хушшинче хăйсен тăван çĕршывне таврăнма килĕшмен çынсем пур тенине те йышăнмастпăр. Корейăри юнлă вăрçа чарса лартасшăн пулнипе кăна тата Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелени Инçет Хĕвелтухăçĕпе мĕнпур тĕнчери халăхсен мирпе хăрушсăрлăх ыйтăвĕпе çыхăнса тăнипе кăна эпир çак çул çине тăратпăр, вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăн пирĕн енĕн тыткăна лекнĕ çыннисене, вĕсем тепĕр енĕ харатса пĕтернипе киле таврăнма хăраççĕ пулсан, нейтральнăй государство аллине пама сĕнетпĕр. Интересленекен енĕсен вĕсене ăнлантарса парас пулать. Çакăн хыççăн вĕсене репатриацилесси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс татса пама пулать. Çапла вара çакă вăл Корейăра перемири тăвас ĕçре чăрмав пулса тăма пултараймасть.

Эпир çакна ĕненсе тăратпăр: Китай Халăх Республикин Правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви Корейăра вăрçă ĕçĕсене чарса лартас тĕллевпе тăвакан çакă сĕнĕ утăм вăл хăйсен ывăлĕсем Корейăра икĕ енче тăрса пĕр-пĕринпе çапăçакан халăхсен пурнăçĕн интересĕсене туллин тивĕçтерет, çавăн пекех вăл тата пĕтĕм тĕнчери халăхсен тĕп интересĕсене тивĕçтерет. Пĕрлешнĕ Нацисен командованийĕ тĕрĕссипе мир тума тăрăшать пулсан, вăл пирĕн çак сĕнĕве йышăнĕ.

ПЕКИН, 1953 çулхи мартăн 30-мĕшĕ».

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин премьер-министрĕ маршал Ким Ир Сен пĕлтерни

ПХЕНЬЯН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Демократиллĕ Корея Халăх Республикин премьер-министрĕ маршал Ким Ир Сен çакăн пек пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

«1953 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче Китай Халăх Республикин государство администраци совечĕн премьерĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ господин Чжоу Энь-лай тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илес ыйту пирки, çавăн пекех тата тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва йĕркелес пирки, çапла вара Корейăра вăрçă ĕçне чарса лартма килĕшӳ тăвас пирки заявлени турĕ.

Çакна май Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви çапла пĕлтерет.

Китай Халăх Республикин правительстви çӳлте асăннă заявленине Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе Китай Халăх Республикин правительствисем пĕр-пĕринпе килĕшсе татăлнă тăрăх туса хатĕрленĕ. Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви çак заявленине пĕтĕмпех — политикăллă хаклă-тăрăва хак панипе те, унта çырса хунă мĕнпур конкретлă выводсемпе тата сĕнӳсемпе те килĕшет. Çавăнпа пĕрлех Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви Китай Халăх Республики правительствин заявленине пĕтĕмпе ырлать кăна çеç мар, тата ăна тĕрĕслĕхлĕ заявлени, Корейăри вăрçа чарса лартма тĕллев тытакан заявлени тесе шутлать. Кэсонпа Паньмыньчжоньра икĕ енĕ хушшинче пынă калаçусем вăхăтĕнче Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес политика тытса пычĕ, вăрçа чарса лартасси çинчен хăвăртрах килĕшӳ тума пĕтĕм вăя хурса тăрăшрĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви, малалла юн юхтарассине чарса лартма тăрăшса, Чжоу Энь-лай господин çӳлте асăннă заявленире панă сĕнӳсем тăрăх Корейăра вăрçа чарса лартасси çинчен килĕшӳ тума кирлĕ мерăсем йышăнма хатĕр тăрать. Çак сĕнӳсем вĕсем тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен тăракан ыйтăва кăна мар, вăрçа чарса лартасси çинчен килĕшӳ тума ку тапăнчченех чăрмантарса тăнă пĕртен-пĕр сăлтав пулса тăнă ыйтăва—тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва—тĕрĕс татса памалли çĕнĕ утăм пулса тăраççĕ. Çак сĕнӳсем тыткăна илнĕ мĕнпур çар çыннисене, хăйсен тăван çĕршывне таврăнма тăрăшакан мĕнпур çар çыннисене репатриацилеме, çавăн пекех тата нейтральнăй государство аллине паракан тыткăна илнĕ ытти çар çыннисене репатриацилес ыйтăва та тĕрĕс татса пама пулăшаççĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас политикăна çирĕппĕн тытса пырса, çакна шанса тăрать: çак сĕнӳсене йышăннă тăрăх тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва, çапла вара Корейăра вăрçа халех чарса лартасси çинчен тăракан ыйтăва татса пама пулать. Çакă вăл мĕнпур çĕршывсенчи мире юратакан халăхсен ĕмĕтне тивĕçтерет.

Эпир çапла шутлатпăр: ООН çарĕсен енĕ чăннипех миршĕн тăрать пулсан, вăл пирĕн сĕнӳсене йышăнĕ».

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем иртнĕ кун хушшинче хĕвелтухăç фрончĕн икĕ участокĕнче тăшман разведкин отрячĕсемпе çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 7 самолетне персе ӳкернĕ.

Ким Ир Сен вăйлă тырпул туса илнĕ хресченсене йышăннă

ПХЕНЬЯН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри хаçатсем Корея тĕп телеграф агентстви Корейăри Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен кабинечĕн председателĕ маршал Ким Ир Сен Кăнтăр Хамген провинцийĕнчи вăйлă тырпул туса илнĕ хресченсемпе çар çыннисен çемйисен делегацине йышăнни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Хăйсен çулпуçĕпе калаçнă чухне хресченсем Ĕçлĕх партине, Республика правительствине тата маршал Ким Ир Сена ĕç хресченĕсемшĕн хытă тăрăшнăшăн чĕререн тав тунă. Хресченсемпе калаçнă чухне маршал Ким Ир Сен ялти ĕçсемпе, хресченсен пурнăçĕпе, çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынипе интересленнĕ тата хресченсене интересленекен ыйтусем çине ответ панă. Вăрçă пирки тата Америка интервенцийĕпе агрессорсен тискерлĕхне пула йывăрлăхсем тӳссе иртерме тивет пулин те, тенĕ маршал Ким Ир Сен, Корейăри Ĕçлĕх партийĕпе Халăх правительстви ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе тăтăшах пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Çавна пула иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕ. Республикăри ĕççыннисене апат-çимĕç тăратасси лайăхланнă. Кăçалхи çураки, тенĕ Ким Ир Сен, вăрçă вăхăтĕнче иртерекен виççĕмĕш çураки пулать. Кăçал вăйлă тырпул туса илес тесе, пĕр-пĕрне пулăшассишĕн пыракан юхăма тата анлăрах сармалла. Çуракине: «Вăйлă тырпул туса илме çуракине кăтартуллă иртерер» текен лозунгпа иртермелле.

Ким Ир Сен çуракине вăхăтра тата лайăх иртермелле тăвас тĕлĕшпе влаçсен вырăнти органĕсемпе халăх комитечĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинче тĕплĕ чарăнса тăнă.

Юлашкинчен маршал Ким Ир Сен республика хресченĕсем малашне те мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса хăйсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырĕç, республика тылне тĕреклетĕç, çакăнпа вара тăшмана çĕнтерес ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пырĕç, тесе каланă.

Американецсем тыткăна илнĕ çар çыннисене çаплах вĕлереççĕ

ПАРИЖ, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин Сеулри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Кочжедо утравĕ çинчи лагерьте Америка хуралĕ тыткăнри икĕ çар çыннине вĕлернĕ.

Корейăра тыткăнри çар çыннисене улăштарса илес ыйту пирки

ГЕНЕРАЛ КЛАРК, МАРШАЛ КИМ ИР СЕН, ГЕНЕРАЛ ПЫН ДЕ-ХУЭЙ ÇЫРАВĔСЕМ ÇИНЧЕН ТАТА ЧЖОУ ЭНЬ-ЛАЙ ПĔЛТЕРНИ ÇИНЧЕН УРĂХ ÇĔРШЫВСЕНЧИ ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Тыткăна илнĕ çар çыннисене улăштарса илесси тата Корейăра перемири тăвасси çинчен генерал Кларкпа маршал Ким Ир Сен тата генерал Пын Дэ-хуэй пĕрпĕринпе çырусем улăштарса илни çинчен, çавăн пекех тата Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чжоу Энь-лай пĕлтернĕ пирки Америка хаçачĕсем нумай çыраççĕ.

Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Чжоу Энь-лай пĕлтернĕ хыççăн Америка столицинче «тен, юлашкинчен, Корейăра мир тума пулĕ, текен шанăç пăртакках сисĕнет». Корреспондент çакна палăртать: государство департаменчĕ «питех те сыхланулла позици» йышăннă, вăл Чжоу Энь-лай сĕнĕвĕсем пирки хăйсем куçарчă документа иличчен нимĕнле официальнăй пĕлтерӳ те пичетлемест тесе кăтартса панă. Çав вăхăтрах Вашингтонра ют çĕршыв дипломачĕсем хушшинче Чжоу Энь-лай сĕнĕвĕсем пирки Америка представителĕсенчен ытларах шанса тăни сисĕнет.

Корреспондент кăтартса панă тăрăх, США государство департаменчĕ юлашки вăхăтри ĕçсем çинчен тăракан ыйту пирки хăйĕн мĕнпур «союзникĕсемпе» тачă çыхăну тытать.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви çапла шутлать: Нью-Йорк биржинче акцисен курсĕ мартăн 30-мĕшĕнчи пек чакни юлашки икĕ çул хушшинче нихçан та пулман.

Çавăн пекех тавар рынокĕнче те хаксем сасартăк чакни палăрать.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ ООН-ăн штаб-хваттерĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Генеральнăй Ассамблейăн VII-мĕш сессийĕн председателĕ Пирсон: Чжоу Энь-лай сĕнĕвĕ «питех те паха событи пулса тăрать, ку сĕнĕве, ним иккĕленмелли те çук, тĕплĕн сăнаса вĕренес пулать», тенĕ.

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Генерал Кларкпа маршал Ким Ир Сен тата генерал Пын Дэ-хуэй хушшинче çырусем улăштарса илнине Англи общественносĕн пысăк пайĕ тата чылай хаçатсем ырă кăмăлпа йышăнса илнĕ.

Чжоу Энь-лай тыткăнри çар çыннисене улăштарса илесси çинчен тата Корейăра перемири тăвасси çинчен пĕлтерни çинчен чарăнса тăрса, «Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: ĕçри тĕп йывăрлăха пĕтерме хыççăн уйрăм йывăрлăхсем кайри вырăна тăрса юлаççĕ. «Корейăра перемири тăвасси, тесе çырать хаçат, сасартăк пурнăçа кĕмелли ĕç пулса тăчĕ».

«Дейли экспресс» хаçат: çак сехетре шанмасăр тăмалла мар, «хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем миршĕн тăнине кăтартмалла», тесе çырать.

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн представителĕ пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Англи Британи империне кĕрекен çĕршывсемпе, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе, Франципе тата Китай Халăх Республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Корея ыйтăвне йĕркелесе ярас пирки панă сĕнӳпе интересленекен ытти державăсемпе консультаци иртерет.

Министерство представителĕ çапла каланă: Чжоу Энь-лай мартăн 30-мĕшĕнче панă сĕнĕве «тĕплĕн сăнаса вĕренни кирлĕ, çапах та вĕсем малтанах шанăç параççĕ».

ПАРИЖ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Парижра паян тухнă хаçатсем Чжоу Энь-лай тыткăнри çар çыннисене улăштарса илес тата Корейăра перемири тăвас ыйту пирки пĕлтернине курăнакан вырăнта пичетлесе кăларнă.

«Юманите» хаçат çак заявлени çинчен тĕплĕн çырать.

«Комба» хаçат Чжоу Энь-лай пĕлтернине «питĕ кирлĕ ĕç» тесе хаклать, мĕншĕн тесен, тет вăл, «çакă сĕнӳ Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине шанса тăма май парать».

«Фигаро» хаçат: Чжоу Энь-лай сĕнĕвĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăраççĕ, çавăнпа та çак событи çине тимлĕн пăхмалла, тесе çырать.

«Çапла ĕнтĕ,—тесе çырать «Фран-тирер» хаçат,—Пекин миршĕн тăнине кăтартса пачĕ. Çакна чун-чĕрери шухăшкăмăлпа тунă, вăл уçă пама пултарать, тесе шутлаççĕ».

ДЕЛИ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Дели хулинчи радио пĕлтернĕ тăрăх, Индин ООН-ри делегачĕ Кришна Менон Китай ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чжоу Энь-лай тыткăнри çар çыннисене репатриацилесси çинчен тăракан ыйту пирки ĕпер пĕлтерни пирки çапла каланă: çак заявлени вăл пĕтĕм тĕнчешĕн шанчăклă малашлăх уçса парать. Çакă вăл пысăк та савăнăçлă хыпар, тенĕ вăл.

АРГЕНТИНĂРА ТАВАР ХАКĔСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ӲСТЕРНĔ

БУЭНОС-АЙРЕС, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Промышленноçпа суту-илӳ министерстви, çĕрĕç тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç министерствипе пĕрле, Буэнос-Айрес хулинче тата ун çывăхĕнче пурăнакан халăха сутакан ĕне ашĕн хакне ӳстерни çинчен пĕлтернĕ. Ĕне ашĕн хакне, иртнĕ çулхи январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 10—25 процент ӳстернĕ.

Çавăн пекех нефтьпе нефть продукчĕсен хакне 40 процент ӳстерни çинчен тата газпа усă курнăшăн тӳлемелли хака чылай ӳстерни çинчен пĕлтернĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Генеральнăй комитетра

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Генеральнăй комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Комитет Генеральнăй Ассамблейăн VII-мĕш сессийĕн кун йĕркине çĕнĕ пункт: «Бирма союзĕ ăна хирĕç Формозăри гоминдан правительстви агрессиллĕ ĕçсем тунă пирки панă жалоба» ятлă ыйту кĕртесси çинчен сӳтсе явнă. Ку ыйтăва кун йĕркине кĕртме Бирма правительстви сĕннĕ.

Ларура тухса каланă чухне Бирма представителĕ: гоминдан çарĕсем Бирмăн территориллĕ пĕрлĕхĕпе суверенитетне хирĕç агрессиллĕ ĕçсем туни Инçет Хĕвелтухăçĕнче мир ĕçне хăратса тăрать, тенĕ. Вăл çакна палăртнă: 1950 çулта пуçланнă çак агресси хальхи вăхăтра анлăрах та анлăрах саралса пырать. Çакна шута илсе, Бирма представителĕ Ассамблея кун йĕркине Бирма правительстви сĕннĕ ыйтăва кĕртме тата вăл сĕннĕ резолюци проектне йышăнма кирли çинчен каланă. Бирма правительствин сĕнĕвĕнче Генеральнăй Ассамблейăн Хăрушсăрлăх Советне çакăн пек сĕнӳ памалла, тесе каланă: «Формозăри гоминдан правительствине асăннă агрессиллĕ ĕçсем тунăшăн сивлемелле тата Формозăри гоминдан правительстви Бирма союзне хирĕç тăвакан агрессиллĕ ĕçсене халех чарса лартмалла тăвас тĕлĕшпе кирлĕ утăмсем тумалла».

Гоминдан представителĕ: Бирма правительстви тăратнă сĕнĕве Генеральнăй Ассамблейăра сӳтсе явни çак ыйтăва татса пама пулăшмасть, тенĕ.

Анчах та гоминдан агенчĕн çак вырăнсăр сĕнĕвне никам та йышăнман. Генеральнăй комитет Ассамблейăн кун йĕркине Бирма делегацийĕ сĕннĕ ыйтăва кĕртме йышăннă. Гоминдановец «Формозăри гоминдан правительстви» текен сăмахсем вырăнне «Китай Республикин правительстви» тесе çырма сĕннĕ. Бирма представителĕ çакăн пек улăштарса çырассине хирĕç пулнă. Вăл: Бирма правительстви Китайри пĕртен-пĕр законлă правительство тесе Центральнăй Халăх Правительствине шутлать, Формоза утравĕ çинчи гоминдановецсен хăйсене Китай правительстви тесе шутлаттарма нимĕнле право та çук, тенĕ.

Совет Союзĕн представителĕ А. Я. Вышинский Бирма представителĕн сĕнĕвĕ майлă тухса каланă.

Лару вĕçĕнче Генеральнăй Ассамблейăн председателĕ Пирсон Китай Халăх Республикин премьерĕпе ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕнчен Чжоу Энь-лайран Корейăра вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси çинчен калаçусем пуçарас пирки телеграмма илни çинчен пĕлтернĕ. Пирсон çак телеграммăна официальнăй документ вырăнне хурса, Генеральнăй Ассамблея делегачĕсене халех салатса памалла тăвасси çинчен пĕлтернĕ.

Хăрушсăрлăх Совечĕн хупă ларăвĕ çинчен пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). ООН-ăн Хăрушсăрлăх Совечĕн мартăн 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕ çинчен Совет председателĕ — Пакистан представителĕ Бухари алă пуснă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă.

Хăрушсăрлăх Совечĕ хăйĕн 617-мĕш ларăвне пухăннă, тенĕ çав пĕлтерӳре. Лару хупă йĕркепе пулса иртнĕ. Хăрушсăрлăх Совечĕ Франци представителĕ панă сĕнĕве йышăннă. Унта Генеральнăй Ассамблейăна Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн генеральнăй секретарĕ пулма Даг Хаммаршельд господина — Швеци портфельсĕр министрне уйăрса лартма сĕннĕ. Çак сĕнӳшĕн 10 сасă пулнă, пĕр делегат нихăш майлă та сасăламан. Хирĕç пĕр сасă та пулман. Сĕнĕве Генеральнăй Ассамблея председателĕ патне ярса панă.

Ассоциэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ ООН штаб-хваттерĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Хăрушсăрлăх Советĕнче Хаммаршельд кандидатуришĕн сасăланă чухне гоминдановец сасăлама тытăнса тăнă.

ПĔЛТЕРНИ

Апрелĕн 3-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотека çуртĕнче И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕренекенсем валли иккĕмĕш хут лекци пулать. Тема: «Хулапа ял хушшинчи хире-хирĕçлĕхе пĕтересси тата вĕсем хушшинчи паллăрах уйрăмлăхсене пĕтермелли майсем».

Лектор—Н. М. Мурыщкин юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 3-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Виçĕ туй». Апрелĕн 4-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Молодой человек». Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

ФИЛАРМОНИ ЗАЛĔНЧЕ — апрелĕн 3-мĕшĕнче концерт-лекци. Тема: «Симфониллĕ оркестрăн инструменчĕсем». 21 сехетре пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—апрелĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче «Небесный тихоход».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, партия пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.